Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938
НОЙАБĔР
7
ТУНТИКУН
258 (5071) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухаť ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ Пĕр №-ре 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăрăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышлĕннăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйăн — 6—23.

Сывă пултăр Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă револ̧уци 21 çул тултарни!

Джамбул
Казахстанăн халăх йурăçи, орденоносĕц.

Сталин çинчен хывнă йурă

Çилпеле кушăхса, шăрăхпа пăчăхса,
Хирсемпе сăртсенче еп çӳрерĕм пайтах
Сар хĕвел çуттипе ăшшине шыраса.
Тăхăрвунă çула çитсе кĕтĕм те, ак,—
Çав хĕвел ман умма тухрĕ ăшшăн çиçсе.
Тĕлĕкри йевĕр тăтăм еп ун умĕнче,
Ун хĕрӳ вучĕпе чĕреме ăшăтса.
Сталин! Пирĕн çурхи çут хĕвелĕмĕр ес!
Сан чĕрӳн иксĕлми ăшшипе хĕвĕнсе
Йешĕреççĕ хирсем, улăхсем, чечексем,
Хĕрӳреххĕн тапаççĕ мĕнпур чĕресем.
Çамрăк вăхăт ик тапхăр никамшăн пулман,
Еп—старик çӳçĕмсем шурă кĕмĕл пекех,
Еп сана тахçанах ĕмĕтленнĕ курма,
Халĕ куртăм та çармăклантăм каллех.
Çĕнĕрен çамрăк йун, кăмăс пек чăшкăрса,
Иксĕлми вăй-хăват пачĕ ман чĕрене:
Курпунланнă шăмшак та тӳрленчĕ пайан,
Ӳксе пĕтнĕ шăлсем те шăтĕç çĕнĕрен,
Ĕмĕрнех пусмăрта мăшкăл-хурлăх тӳссе,
Тăхăрвун çулта тин çамрăкланнă старик
Саламлаť хал̧ сана, аслă Сталин атте,
Чи телейлĕ те ирĕк çынсен йачĕпе.
Тĕттĕме хĕстерсе, мăшкăла тӳстерсе
Чура тунă пире пушăпа штыкпалăн.
Йытăла çĕç усранă пире пуйансем,
Чĕрери пăлхава пăчлантарнă йалан.
Анчах сĕм тĕттĕме çĕнтерен хĕвел пек,
Есĕ килтĕн те çăлтăн мĕнпур халăха.
Чи телейлĕ çĕршыв гербĕпе йалавне
Кар çĕклерĕмĕр епĕр хĕрӳ алăпа.
Хĕвел—Сталин! Нихăçан та ан сӳн Кремĕлре.
Йурăпа, чĕрепе саламлатпăр сана.
Етемсем хушшинче çакă çут тĕнчере
Халăха чи кирлийĕ—вăл есĕ кăна!

АСЛĂ ОКТĂБĔР

Пайан Совет Сойуз халăхĕн, тĕнчери пур ĕççыннисен аслă та савăнăçлă уйавĕ. Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă револ̧уци çĕнтерни XXI çул тултарчĕ.

Социалисăмлă çĕршыв ӳсĕмĕн чаплă кун-çулĕсем ĕмĕр сӳнми çутăпа йалтăртатса тăраççĕ.

Вĕçĕхĕррисĕр анлă та пуйан çĕршывра социалисăмăн никам çĕнтерейми вăйлă крепăçне—Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузне туса хунă. Çитĕнчĕ социалисăмлă хăватлă государствă. Çук кунта кичемлĕх, чуралăх, пусмăрлăх. Мĕскĕн, чухăн, кул̧турăсăр çĕршывран чечекленекен, малта пыракан çĕршыв пулса тăчĕ пирĕн çĕршыв. Етемлĕх историйĕнче пулман хăвăртлăхпа çитĕнчĕç промышлĕннăçпа йалхуçалăхĕ. Колхоз стройĕ ĕмĕрлĕхех çĕнтерчĕ. Улăп утăмĕсемпе ӳсет пирĕн кул̧турă, искусствă, пултарулăх, литературă, наукă.

Пуйан та кул̧турăлă пурăнаť пирĕн халăх. Ĕççĕрлĕх, ĕççĕр тăрса йулас хăрушлăх пирĕн ĕççыннисемшĕн авала тăрса йулчĕç. Пирĕн ĕçкунĕ — тĕнчере чи чĕски. Кунта ĕç—хисеплĕх ĕçĕ, мухтавлăх ĕçĕ, чаплăлăхпа пултарулăх ĕçĕ пулса тăчĕ, стахановла аслă йухăма çуратрĕ.

Кунта телей кашни пӳрте килсе кĕрет, кунта пурнăç ылттăн тумпа тумланнă. Лайăх пирĕн пайанхи пурнăç, татах та чаплăрах пирĕн малашлăх.

Социалисăм çĕнтерĕвĕсен чаплă итогне Сталинла Конституцире çырса хунă. Сталинла Конституци совет гражданинĕн аслă прависене ĕмĕрлĕхе çирĕплетрĕ. Совет çыннин ĕçлеме, канма, вĕренме, тата ватăлсан пулăшу илме права пур. Совет гражданинĕ кăна тулли правалă. Вăл хăйĕн малашлăхĕшĕн иккĕленмест, малашлăх çине тӳррĕмĕн те шанăçлăн пăхаť. Совет гражданинĕ—вăл мухтавлă та хисеплĕ йат.

Совет Сойузĕ — вăл нумай мĕлйунлă телейлĕ халăхсен аслă кил-йышĕ. Сталинла Конституци йалавĕ айĕнче, Ленинла-Сталинла наци политикин ырлăхĕпе пирĕн нумай нацилĕ халăхсем аталанса ӳсеççĕ. Парти Тĕпкомĕ, Сталин йулташ йертсе пынипе, аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе, ытти республикăсемпе пĕрлех, пирĕн Чăваш республикĕ те хăвăрт çитĕнчĕ. Чăваш республикĕ социалисăмлă промышлĕннăçлă, йалхуçалăхлă, чечекленекен кул̧турăлă, малта пыракан, орденлă республикă пулса тăчĕ.

Епĕр, пĕтĕм совет çыннисем, хамăрăн тăван çĕршыва чĕререн, кăмăлтан хĕрӳллĕн йуратаťпăр. Патриотисăм, пирĕн савăнăçлă çĕнĕ пурнăç çынсене çунатлантараť, вĕсенче çĕнĕрен çĕнĕ вăйсем çуратаť. Гризодубăвă, Осипенко, Раскова геройăсем хăйсен хăйулă вĕçевĕ чухне тăван çĕршыв çинчен шухăшланă. Тăван çĕршыва йуратнине чĕрере тытса пирĕн Хĕрлĕ Çар бойецсем—Хасан кӳлли патĕнчи çапăçури паттăрсем—Пожарский, Левченкă, Винокурăв тата ытти геройсем Йапони самурайĕсене вирлĕн çапса хуçрĕç. Папанин, Федăрăв, Кренкел, Ширшов геройсене Арктикăри сивĕ пушхирсенче хăйсен йăвăр ĕçне тума тăван çĕршыва йуратни пулăшнă.

Совет халăхĕ—геройла халăх. Вăл тăван çĕршывшăн, унăн чапĕшĕн йаланах паттăрăн кĕрешнĕ, кĕрешет те.

Пирĕн халăх социалисăм строителствин аслă çĕнтерĕвĕсене Ленин—Сталин партийĕ тавра таччăн пĕтĕçнине, политикăлă-морал̧ тĕлĕшĕнчен çирĕп пĕрлĕхлĕ пулнипе тунă.

Совет Сойузĕн, РСФСР тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсенче коммуниссемпе партире тăмнисен блокĕ чаплăн çĕнтерчĕ.

Государствăн ĕçне тума çĕнĕ çынсем килчĕç. Ӳсеççĕ пирĕн кадрсем. Халăх хăйĕн хушшинчен çĕнĕ талантсем кăлараť. Халăхăн пултарулăхĕ вăйлă çăл куçĕ пек палкаса тапса тăраť.

Пĕтĕм тĕнчипе паллă историлĕ çĕнтерӳсене совет халăхĕ вăйлă клас кĕрешĕвĕнче çĕнсе илчĕ. Халăхăн тискер тăшманĕсем—троцкиссем, бухаринцăсем, буржуалă националиссем пирĕн чаплă çĕршыва фашиссене сутма, капиталисăмлă пусмăрлăха кайала тавăрма шутланă. Анчах вĕсен ĕмĕчĕ пулаймарĕ! Совет разведки вĕсен тĕп йăвисене çапса аркатрĕ. Мухтав пирĕн хисеплĕ наркомвнуделĕцсене! Совет халăхĕ хăйĕн тăшманĕсене йаланах пĕр хĕрхенмесĕр çĕмĕрсе пынă, пыраť, пырĕ те.

Мĕн чухлĕ пысăкрах пирĕн ӳсĕмсем, çавăн чухлĕ ытларах курайманççĕ пире фашиссем. Вĕсем Совет Сойузне хирĕç хăйсен йунлă хĕçне хăйраççĕ. Анчах вĕсем темĕнле йунасан та Совет Сойузĕ шикленмест. Пирĕн хĕçпăшалсем хатĕр, тар йаланах типĕ тăраť. Çĕршывăн хăватлă терекĕ — Хĕрлĕ Çар, пирĕн тинĕс чиккисен шанчăклă хуралĕ — Тинĕс-çар флочĕ, тăшмана сывлăшран вилĕм кӳрекен сывлăш флочĕ—Сталинла авиаци аслă Октăбĕрте кĕрешсе илнине сыхласа тăраççĕ. Пирĕн çарпа пĕрле пĕтĕм халăх: рабочисем, хресченсем, совет интеллигенцийĕ — пурте çĕршывшăн тăма хатĕр.

Пĕтĕм тĕнчипе халăх фрончĕ, пĕрлĕх фрончĕ фашисăма хирĕç тăраť. „Фашисăм вăл — капиталиссемпе помещиксен рабочисемпе, хресченсене тата ĕç интеллигенцине хирĕçле террорла политики. Фашисăм вăл—йут çĕрсене туртса илессишĕн пыракан вăрçă. Фашисăм—тĕнчери халăхсен ирĕклĕхĕн тата никама пăхăнмасăр пурăнассин чи хайар тăшманĕ. Фашисăма хирĕç кĕрешме пĕтĕм вăйсене мобилизацилер!" (ПСК(б)П Тĕпкомĕн лозунгĕсенчен).

Капиталисăмлă çĕршывсенчи пролетарисене, пĕтĕм ĕççыннисене хăйсен кĕрешĕвĕнче пирĕн Совет Сойузĕ, Сталинла Конституци шанăç параť, етемлĕхĕн пысăк генийĕ—Аслă Сталин хавхалантараť.

Сталин — тĕнчери пĕтĕм ĕççыннисен çĕнтерӳ йалавĕ, вăл пирĕн вăй, пирĕн шанăç, пирĕн ĕмĕт, пирĕн хĕвел.

Сывă пултăр Ленин—Сталин партийĕ!

Сывă пултăр та çирĕплентĕр пирĕн хăватлă тăван çĕршыв—Советлă Социалисăмлă Республикăсен Сойузĕ!

Çĕнĕ çĕнтерӳсем патне — коммунисăм патне, малала!

Канашри вакунсем йусакан савăтăн теплоелектроцентрал̧не туса пĕтерсе, вăхăтлăх експлоатацине панă

ПСК(б)П Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Канашри вакунсем йусакан савăт руководствинчен савăтăн теплоелектроцĕнтрал̧не нойабĕрĕн 4-мĕшĕнче туса пĕтерес, вăхăтлăх експлоатацине пани çинчен пĕлтерекен телеграммă илнĕ.

Савăтри рабочи-стахановĕцсемпе ударниксен, инженерла-техникла работниксен коллективĕ Обкомпа Халăх Комиссарĕсен Советне йанă телеграммăра: социалисăмлă ăмăрту йалавне çӳле çĕклеме, ТЭЦ-а срукченех йĕркелĕн ĕçлекен тума, аварисĕр ĕçлемеле тума, савăта прорывран кăларма, 1938 çулти нойабĕрпе декабĕр планĕсене срукчен тултарма пулни çинчен пĕлтереççĕ.

ПСК(б)П Обкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ савăт руководстви тата рабочисемпе инженерла-техникла работниксен коллективĕ патне йанă телеграммăра: савăт коллективĕ Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă револ̧уци уйавĕ тĕлне електроенергин кирлĕрен те кирлĕ обйектне — теплоелектроцентрал̧не ĕçе йани çинчен пĕлтернине кăмăллăн йышăнатпăр, çакă вăл сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерессишĕн мĕнле кĕрешмелине кăтартакан тĕслĕх пулаť, тенĕ.

Обкомпа Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çак чаплă çĕнтерӳ тата Октăбĕр револ̧уцин XXI-мĕш Аслă уйавĕ йачĕпе саламласа, савăт коллективне савăта Чăваш республикĕнче малта пыракан стахановла коллектив туса хума чĕнеççĕ.

Стахановла йухăм вăйланнă май

ÇĔМĔРЛЕ (хамăр корр.). Предприйатисенчи рабочисемпе стахановĕцсем Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă револ̧уци 21 çул тултаракан чаплă уйава производствăра тата кул̧турăпа йала строителствинче çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илчĕç.

Комбинатри сушил̧нăй цехра çамрăк комсомолкă - стахановкă Климкинă йулташ йертсе пыракан бригадă çулталăк планне 9 уйăх хушшинчех тултарнă. Халĕ бригадă кашни кунах нормăна 150—182 процент тултарса ĕçлет. Йеремейĕв йулташ смени (сменăра 26 çын) çулталăк планне нойабĕрĕн 15-мĕшне тултарма пулнă. Ăна срукчен пурнăçланă.

Уйрăм стахановĕцсем Октăбĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса татах та лайăх примерсем кăтартрĕç. „Бол̧шевик" савăтри рубил̧щиксем: Краснов, Йегорăв, Андрейĕв йулташсем куллен 45—50 тоннă вутă вакласа плана 200-шер процент тултараççĕ, комбинатри стол̧ярсем: Тихăнăв, Мел̧никăв ĕç тухăçлăхне 200—250 процент тултарса пыраççĕ.

М. Калинин

Совет влаçĕ çирĕм пĕр çул тултарни

Совет влаçĕ пуçланнăранпа çирĕм пĕрремĕш çулталăкра йалти социалисăмлă хуçалăх малала çирĕпленчĕ. Ку çулталăк йалхуçалăхĕшĕн пит те хăйне майлă пулчĕ. Çакна аса илтерни те çителĕклĕ: çĕршывăн вăтаçĕрти районĕсенче ийун̧, ийул̧ тата август уйăхĕсенче вăтăр градуса йахăн йе ытларах та ăшă тăчĕ. Виçĕ уйăха йахăнах çĕре нӳр памалăх çăмăр пĕрре те пулмарĕ. Вата çынсем, вăл шутрах епĕ те, кун пек вĕри çанталăк пулнине астумастпăр, теççĕ. Çамрăксем тăрăхласа: çавăнпа ĕнтĕ ватăсем есĕр, нимĕн те астумастăр çав, теççĕ. Çамрăксем ку ыйтура, тен тĕрĕс калаççĕ, тейĕпĕр. Анчах çапах та, çанталăк çавтери аван мар тăчĕ пулсан та, кăçал тырпул лайăх тухăçлă пулчĕ, уйрăм вырăнсенче тата уйрăм кул̧турăсем çеç лайăхах пулмарĕç. Сăмахран, Мускав облаçĕнче пахчаçимĕçсен тухăçĕ вăтамран кайарах пулчĕ.

Колхозлă йĕрке уйрăм хресчен хуçалăхĕпе танлаштарсан нумай маларах пулни ытларах та ытларах курăнса пыраť. Тĕштырăсем, çавăн пекех техникăлă кул̧турăсем акса тăвакан колхозсенче производствă тăтăшах ӳссе пыраť. Çак ӳсĕмĕн тĕп сăлтавĕ вăл—колхозсем организаци тĕлĕшĕнчен çирĕпленсе пыни, йалхуçалăхне малти техникăпа пуйанлатни пулса тăраť, тесе шутлатăп епĕ.

Йубилей кунĕсенче пирĕн патра, сăмах майĕпе каласан, пĕтĕм тĕнчери пекех, тунă ĕççен итогĕсене тума, вĕсене иртнĕ çулти çитĕнӳсемпе танлаштарса пăхас йăла пур. Епĕ ун пек тумастăп, мĕншĕн тесен ун пек статйасемпе докладсем çителĕклех пичетленсе тухĕç, тесе шанса тăратăп. Епĕ хал̧хи вăхăтра йалти пурнăçра хăйсемех тухса тăракан ыйтусем çинче чарăнса тăрасшăн. Ку вăл—йалта кул̧турă талкăшпех хăпарса пыни тата уйрăмăнах йалхуçалăх ĕçĕн кул̧тури хăпарса пыни. Нумайĕшĕ тĕлĕннипе алăсемпе сулкаласа çапла ыйтма пултарĕç: мĕнле кул̧турă çинчен калаť-ха ку? Йалта шкулсем, вăл шутрах—вăтам шкулсем тата йатарласах уçнă шкулсем те калама çук пысăккăн ӳсни çинчен пурте пĕлеççĕ вĕт. Епĕ урăххи çинчен каласшăн. Епĕ çакăн çинчен калатăп: колхозниксен хулари предприйатисенчи рабочисем пек, хăйсен, производствăри кул̧турине инженерла-агрономиле персоналăн виçипе танлашиччен хăпартассишĕн тăрăшас пулаť.

Хал̧хи вăхăтра кул̧турăлă çĕкленӳ çулĕ, ăслăлăхпа наукăна вĕренсе алла илмели çул йалта пит те анлă тата ăна тума вăхăт пур. Пирĕн, сăмахран, унта социалисăмла ăмăрту тата спорт çителĕклех анлă сарăлса кайнă. Анчах çутçанталăкпа кĕрешесси, çутçанталăк вăйĕсене алла илсе, унăн паха йенĕсемпе çынсене усă кӳме усă курасси çавăн пекех илĕртӳлĕ мар им вара? Йалхуçалăхĕнче кашни утăмрах çакнашкал чăрмавсем тĕл пулаççĕ: кĕтеççĕ çăмăр—хĕвел хĕртет, уйăр çанталăк кĕтеççĕ—çăмăр пулаť т. ыт. те.

Иалти кул̧турă чи çӳлĕ пусăма çĕкленме тивĕç. Йалти интеллигенци умĕнче тумали ĕçсем вĕçĕхĕррисĕрех. Апла пулсан, çивчĕ ăса вал̧л̧и ĕçлемели пур.

Кун çине епĕ производствăпа хуçалăх йенчен çеç пăхмастăп—ăна пурте пĕлеççĕ, епĕ пĕтĕм кул̧турăна хăпартас йенĕпе те пăхатăп. Çутçанталăк вăйĕсемпе астăнлă пулса кĕрешни çынăн ăсне пуйанлатаť, унăн пурнăçне тарăн содержанилĕ тăваť, вара пурнăç çулĕ интеллектуаллă пулаť. Çак ĕнтĕ хал̧хи вăхăтра йал пурнăçне хула пурнăçĕн виçипе танлаштариччен хăпартас çĕрте ĕçе татса паракан услови пулса тăраť.

Ку вара колхозри хресченсен политикăлă активлăхĕ малала ӳсессине чăрмантармĕ-ши? Ман шутпа, йалтах урăхла: çаксем вĕсем пурте йалти обшчествăлă-политикăлă пурнăçа пуйанлатса, ăна активларах туса пырĕç.

Прăçник йачĕпе ССР Сойузĕнчи хресченсене çаксене сунатăп епĕ.

Шупашкарти чаплă лару

Ĕнер Шупашкарти Кинотеатр çуртĕнче Шупашкар хула совечĕн чаплă ларăвĕ пулса иртрĕ.

Чаплă ларура пулнисем тăвăллăн алă çупнипе халăхсен çулпуçне Сталин йулташа, унăн чи çывăх соратникĕсене Молăтăв, Каганович, Ворошилăв, Калинин, Андрейĕв, Микойан, Жданăв, Йежов, Хрушчов, Димитров, Тел̧мăн, Хозе Диаз йулташсене хисеплĕ президиума суйлаççĕ.

Ларура пулнисем Хасан кӳлли патĕнчи çапăçу участникне, Ф. К. Пушкин йулташа хĕрӳллĕн кĕтсе илеççĕ, ăна лару президиумне суйлаççĕ.

Октăбĕрти социалисăмлă револ̧уци 21 çул тултарни çинчен чаплă ларура ПСК(б)П Обком çекретарĕ А. А. Волкăв йулташ доклад туса пачĕ. Ларура пулнисем доклад вăхăтĕнче нумай хутчен Сталин йулташ йачĕпе тăвăллăн „урра" кăшкăраççĕ.

Доклад пĕтнĕ хыççăн лару пысăк кăмăлпа Сталин тата Молăтăв йулташсем патне саламсем йама йышăнчĕ.

Чаплă ларăва Шупашкарти осоавиахимовĕцсен, пионерсен представителĕсем пырса саламларĕç.

Чаплă лару хыççăн пысăк концерт пулчĕ.

Сывӑ пултӑр рабочисемпе хресченсен сойузӗ—совет влаҫӗн никӗсӗ!

Социалисӑм ҫӗнтерӗвӗсем

Окт̆абӗрти Социалисӑмлӑ Аслӑ револļуци пурнӑҫа хӑлӑхсене валли ирӗклӗх ҫулӗ уҫса пачӗ. Халӗ ӗҫсыннисем ҫӗнтерес тесен, мӗнле кӗрешмелине лайӑх пӗлсе тӑраҫҫӗ.

Пирӗн историйӗ ҫӗнтерӳсем — пӗтӗм тӗнчери ӗҫсыннисен ҫӗнтерӗвӗсем. Пирӗн кӗрешӳ—вӗсен кӗрешӗвӗ те. Пирӗн аслӑ уйӑв—тӗнчери ӗҫхалӑхӗн аслӑ уйӑвӗ. Пирӗн аслӑ Сталинла Конституци — пӗтӗм ӗҫсыннисен йалавӗ, социалисӑм ҫӗнтерӗвӗсен йалавӗ пулса тӑраť.

Пирӗн ҫӗршывӑн хуҫалӑхӗ ҫирӗпленнӗҫемӗн ҫирӗпленсе, ӳссе пыраť. 1938 ҫулта халӑх хуҫалӑхне укҫа хывни 38,3 мӗлйард тенкӗне ҫитнӗ. Ку хисеп, иртнӗ ҫулхипе танлаштарсан, 30 процент ӳснӗ. Промышлӗннӑҫ 1938 ҫулта 110 мӗлйард тенкӗлӗх тавар туса кӑларнӑ.

Иртнӗ ҫулпа танлаштарса пӑхсан, 1938 ҫулхи 8 уйӑх хушшинче ҫӗркӑмрӑкӗ кӑларасси—5 процента йӑхӑн, нефть кӑларасси—9 процент ытла, хурҫӑ шӑратасси—6 процент ытла, тӗрлӗрен металлсене шӑратасси—22 процент ытла, кӗпетумтир ҫӗлесе кӑларасси—10 процент ытла, сахӑр производстви—70 процента йӑхӑн, консервӑсем туса кӑларасси — 26 процент ытла ӳснӗ.

Ҫакӑн пек ӳсӗмсене халӑх хуҫалӑхӗн кашни пайӗнчех курма пулаť. Чукунҫул транспартӗнче те ҫакӑ йулашки ҫулсем хушшинче пысӑк ӳсӗмсем пулчӗҫ. 1936 ҫулта чукунҫулсем талӑкра 75 — 80 пин вакун тийенӗ пулсан, халӗ вӗсем талӑкра 95—98 пин вакун тийеҫҫӗ.

Халӑх хуҫалӑхӗн ҫакӑн пек пысӑк ӳсӗмӗ ӗҫ тухӑҫӗ хӑпарнипе тачӑ ҫыхӑннӑ. 1937 ҫулхи малтанхи ҫурҫулӑхпа танлаштарсан, 1938 ҫулхи малтанхи ҫурҫулӑхра ӗҫ тухӑҫлӑхӗ йӑвӑр промышлӗннӑҫра—15,5 процент тата ҫӑмӑл промышлӗннӑҫра—11 процент ӳснӗ.

Пирӗн йалхуҫалӑхӗ те ҫак ҫулсенче пысӑк ӳсӗмсем турӗ. Халӑхи вӑхӑтра совет ҫӗршывӗн уйхирӗсенче 470 пин ытла трактӑрсем, 137.748 комбайн ӗҫлеҫҫӗ. Йалхуҫалӑхне коллективизацилени тата агрономи наукипе анлӑн усӑ курни тырпул тухӑҫне нумай ӳстерме пулӑшрӗҫ. 1937 ҫулта 7 мӗлйард пӑт тырӑ туса илни ун ҫинчен питех те уҫҫӑн каласа параť. Колхозлӑ йалхуҫалӑхӗ совет промышлӗннӑҫне кирлӗ чӗрӗ таварсене ҫителӗклӗ тӑратаť.

Халӑх хуҫалӑхӗ ӳсӗ пыни май ӗҫсыннисен пурнӑҫ условийӗсем те ҫуллан ҫулах лайӑхланса пыраҫҫӗ. Ӗҫ укҫи фончӗ, 1937 ҫулхи хисепрен 12 мӗлйард тенкӗ ытла ӳссе, кӑҫал 94 мӗлйард тенке ҫитнӗ.

Пирӗн социалисӑмла ҫӗршывра талантсене, пултарулӑ ҫыннисене ӳсме кирлӗ условисем ҫителӗклӗ. Пулӑшни ҫулсенче стахановла йухӑм пайӑн сарӑлнӑ майӑн совет интеллигенцийӗ ҫӗнӗ кадрӗсем нумай ӳссе ҫитӗнчӗҫ.

Совет интеллигенцийӗ халӑхпа тачӑ ҫыхӑнса тӑраť, уншӑн тӑрӑшаť. Малтаран социалисӑмлӑ наукӑн Папанинпа Стаханӑв пек представителӗсем хӑйсен ӗҫӗнче пысӑк паттӑрлӑх кӑтартаҫҫӗ. Вӗсем—тӑван ҫӗршывӑн шанчӑклӑ ывӑлӗсемпе хӗрӗсем, халӑх хушшинчен тухнӑ талантлӑ ҫынсем.

Папанин експедицийӗ пӗтӗм тӗнчене тӗлӗнтерчӗ. Ун хыҫҫӑн нумай та вӑхӑт иртмерӗ, Владимир Коккинакипе Александр Брйандинский йулташсем Мускавран Владивостока вӗҫсе кайса пысӑк рекорд турӗҫ. Кам вӑл Коккинаки? Коккинаки халӑх хушшинчен тухнӑ ҫын, унчченхи грузчик пулса ӗҫленӗ.

Тата виҫӗ совет хӗрарӑмӗ—Гризодубӑвӑ, Осипенко тата Раскова йулташсем тунӑ вӗҫев пӗтӗм тӗнче умӗнче пысӑк рекорд пулса тӑчӗ. Вӗсем партипе правительствӑ хушнӑ ӗҫе тунӑ чухне пӗтӗм Совет ӗҫхалӑхӗ вӗсен вӗҫевне сӑнаса пычӗ. Етем пурӑнман тайгари тӗксӗм те шурӑлӑхӑ вырӑна ларса, вӗсем вунӑ кун йӑхӑн пӗр хыпарсӑр пурӑнни халӑха хурлантарчӗ. Анчах Сталин йулташ совечӗ хӑйсен кашни ҫыннипе тӑрӑшаť. Паттӑр хӗрарӑм-ļотчицӑсене шыраса тупса, тайга пусмӑрӗнчен хӑтарчӗҫ.

Тӑван ҫӗршыв ӗнер паллӑ мар пулнӑ ҫынсене пайан паттӑрла ӗҫсем тума хавхалантараť. Аслӑ сталинла тапхӑр кашни кун ҫӗнӗ геройсем ҫуратаť.

Пирӗн ҫӗршыв наукӑпа тӗпчев ӗҫне вӑйлатассишӗн пур майпа та тӑрӑшаť. 1938 ҫулта наукӑпа тӗпчев ӗҫне тума 1016 мӗлйун тенкӗ уйӑрнӑ. Ку хисеп 1937 ҫулхинчен 20 процент ытларах.

Боļшевиксен партийӗ, Ленин—Сталин партийӗ пирӗн ҫӗршыва социалисӑмӑн ҫирӗп крепӑҫӗ туса хучӗ. Ҫавӑнпа ӗнтӗ ӗҫсыннисен массисем боļшевиксен партине, унӑн аслӑ ҫулпуҫне Сталин йулташа чӗререн йуратаҫҫӗ. Сталин йулташ пирӗн ҫӗнтерӳсен йалавӗ.

ЦИФРӐСЕМПЕ ФАКТСЕМ

Чӑваш республикӗ—чечекленекен промышлӗннӑҫлӑ ҫӗршыв

Пирӗн республикре 1927—29 ҫулсенче пӗтӗмпе государствӑн промышлӗннӑҫ предприйатисем 21 пулнӑ. Вӗсенче 2239 рабочи ӗҫленӗ. Ҫак предприйатисем ҫулталӑкра 1926—27 ҫулсенчи хакпа 12.035 пин тенкӗлӗх продукци кӑларнӑ.

Халӗ республикре 122 предприйати ӗҫлет. Вӗсенче 8840 рабочи. Ҫак предприйатисем кӑҫал 63754,2 пин тенкӗлӗх продукци параҫҫӗ.

Коопераци промышлӗннӑҫӗ те ҫултан ҫул ҫӗкленсе пыраť. 1927—29 ҫулсенче кашни ҫулталӑкра 3656,9 пин тенкӗлӗх продукци панӑ пулсан, кӑҫал 59829,7 пин тенкӗлӗх продукци параҫҫӗ.

Ҫулсӑрлӑха пӗтернӗ

1938 ҫулӑн йанварӗн 1-мӗшӗ тӗлне республикре йакатса тунӑ ҫулсем 7507,5 километр тӑршшӗ, чул сарнӑ ҫулсем 322,6 километр тӑршшӗ, профиллӗ ҫулсем 7022,3 километр тӑршшӗ пулнӑ.

Часах акӑ Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунҫул ӗҫлеме тытӑнаť. Вӑл пӗтӗм халӑх хуҫалӑхне малашне пысӑкраххӑн чечеклентерсе пыма май парӗ.

Социалисӑмлӑ йалхуҫалӑхӗ

1937 ҫулта республикӑри 1688 колхозсен акмали ҫӗр лаптӑкӗ 618,7 пин гектар пулнӑ пулсан, кӑҫал 627,1 пин гектара ҫитнӗ. Колхозсен хирӗсенче пысӑк та вӑйлӑ машинӑсем ӗҫлеҫҫӗ. 1937 ҫулта республикӑри 18 МТС-ра 886 трактӑр пулнӑ. Кӑҫал 23 МТС-ра 1158 трактӑр пур. Колхоз уйхирӗсенче 1937 ҫулта 130 комбайн ӗҫленӗ пулсан, кӑҫал 330 комбайн пур.

Куļтурӑ тата сывлӑха сыхласси

Республикӑри 638 пуҫламӗш шкулсенче 50.300 ҫын, 332 туллимар вӑтам шкулсенче 89.200 ҫын, 71 вӑтам шкулсенче 34 900 ҫын вӗреҫҫӗ. Вӗренекенсен хисепӗ ӳссех пыраť. 55 ача сачӗнче 2600 ача, 309 ача площадкинче 17.500 ача пулнӑ.

Республикре 736 библиотекӑ, 522 вулав ҫурчӗ, 199 клуб, 5 театр, 14 кинотеатр тата куҫса ҫӳрекен киносем 78 ҫӗрте ӗҫлеҫҫӗ.

Чӑваш ӗҫсыннисем хут пӗлменлӗхе пӗтерсе пыраҫҫӗ. Республикӑри пӗтӗм халӑх хисепӗнче хут пӗлекенсем 96 процент шутланаҫҫӗ.

Сывлӑха сыхлас ӗҫ те вӑйлансах пыраť. Халӗ пирӗн чӑваш ҫӗршывӗнче 49 боļница, 55 ҫӗрте врачсен пункчӗ, 4 поликлиникӑ ӗҫлеҫҫӗ.

Совет Сойузӗн Геройӗсем: М. М. РАСКОВӐ, В. С. ГРИЗОДУБӐВӐ тата П. Д. ОСИПЕНКО йулташсем.
Б. Фишман фото-ӳкерчӗкӗ (Сойузфото).

Пирӗн ҫӗршыв—пултарулӑх ҫӗршывӗ

Манӑн атте—рабочи. Вӑл ӗлӗкех авиатӑр пуласшӑн ҫуннӑ. Ҫав шухӑшпа вӑл 1907 ҫулта хӑйӗн ӗҫ укҫипе самоļот тума тытӑннӑ, илес йапалана илмесӗр, ҫийес апата ҫимесӗр, укҫа перекетленӗ.

Ниҫтан та пулӑшу илме май пулман. Машинӑн пӗр-пӗр пайне йе кирлӗ йапаласене илессишӗн уйӑхӗ-уйӑхӗпе тертленсе ӗҫлемеле пулнӑ. Икӗ ҫул хушши ҫапла тертленнӗ хыҫҫӑн, 1909—1910 ҫулсенче Харькӑври ипподромра атте тунӑ самоļотӑн малтанхи вӗҫевӗсем пулса иртнӗ.

Епӗ аттен самоļочӗ патӗнче ҫитӗнтӗм. Манӑн атте вӗҫме питӗ йуратаť̆чӗ. Манӑн 1913 ҫулта ӳкернӗ фото-ӳкерчӗк халӗ те упранаť-ха. Атте мана, хӑйӗн виҫӗ ҫулхи хӗрачине, хӑй тунӑ машин ҫине лартса ӳкерттернӗ.

Пирӗн ҫӗршыври ӗҫсыннисен арӑвӗсем аслӑ Окт̆абӗрти социалисӑмла револļуци хыҫҫӑн тин хӗвел патне хӑпарма пултарчӗҫ. Халӗ ӗнтӗ пирӗн пултарулӑха ӳсме нийепле чӑрмав та ҫук. Совет ҫыннисен ӗнерхи шухӑш-ӗмӗчӗсем пайан ӑнаҫлӑн пурнӑҫа кӗреҫҫӗ.

Капиталисӑмлӑ ҫӗршывсенче хӗрарӑмсемшӗн вӗҫев ӗҫӗ професси пулса тӑнине питех те сахал курма пулаť. Вӗсене капиталиссем-фирмӑсен хуҫисем експлоатацилеҫҫӗ. Капиталисӑмла ҫӗршывсенчи хӗрарӑм-ļотчиксен пурнӑҫӗ калама ҫук хурлӑхлӑ.

Пирӗн телейлӗ ҫӗршывра хӗрарӑм авиацинче ҫирӗп вырӑн йышӑнчӗ. Нумай хӗрарӑмсем ļотчик, штурман, борт-механик, техник пулса, гражданла сывлӑш флотӗнче, наукӑпа тӗпчев институчӗсенче, сывлӑш-ҫар флочӗн чаҫӗсенче арҫынсемпе танах ӑнаҫлӑн ӗҫлеҫҫӗ.

В. Гризодубӑвӑ,
Совет Сойузӗн Геройӗ.

Манӑн пысӑк телей—коммунисӑмшӑн кӗрешни

Епӗ пурнӑҫра тупнӑ пысӑк телей—вӑл коммунисӑмӑн аслӑ идейӗсемшӗн кӗрешнин савӑнӑҫӗ. Ку кӗрешӗве епӗ, Ленин-Сталин партийӗн ретри бойецӗ, хамӑн пурнӑҫӑн йулашки кунӗ ҫывхаричченех пӗтӗм вӑйа, хамӑн пӗтӗм пӗлӗве паратӑп.

Учонӑй, боļшевик, совет гражданинӗ пулса, епӗ хамӑн партине, аслӑ ҫулпуҫне тата учителе—Сталин йулташа хамӑрӑн тӑван ҫӗршывпа пӗрле илнӗ савӑнӑҫлӑ, телейлӗ, пултарулӑ пурнӑҫшӑн чӗререн тав тӑватӑп.

Академик-орденоносец
В.Р. Виļйамс.
ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет депутачӗ.

Пирӗн ҫӗршывра пурте герой пулма пултараҫҫӗ

Епӗ хама хам час-часах ҫапла ыйту паратӑп: Совет влаҫӗ пулман пулсан, епӗ кам пулнӑ пулӑттӑм-ши? Каťаļшчик йе пӗр-пӗр хура ӗҫ тӑвакан ҫын пулнӑ пулӑттӑм.

Парти, комсомол, тӑван ҫӗршыв мана пӑхса ӳстерчӗҫ, воспитани пачӗҫ тата ҫирӗплетрӗҫ. *Епӗ 28 ҫултах Совет Сойузӗн Геройӗ йатне илме тивӗҫлӗ пултӑм.*

Совет ļотчикӗсем хӑйсен ӗҫӗсемпе мухтанма йуратмаҫҫӗ. Вӗсемшӗн вӗҫкӗнлӗнес йӑла йут.

Совет Сойузӗнче кашни тӑрӑшса ӗҫлекен ҫын, партипе правительствӑ чӗнсен, геройсем пекех, хӑйӗн пултарулӑхне палӑртӗ.

Пире пурне те пӗр туйӑм—тӑван ҫӗршыва, партине, Сталин йулташа пӗтӗм чун хавалӗпе йуратни йертсе пыраť.

Полковник **А. СЕРОВ,**
Совет Сойузӗн Геройӗ.

Малашлӑх пирӗнте

Парти, правительствӑ, Сталин йулташ ССР Сойузӗнчи ӗҫсыннисен пурнӑҫне лайӑхлатассишӗн вӗҫӗмсӗр тӑрӑшаҫҫӗ. Пирӗн ҫӗршывра ӗҫ тухӑҫне капиталисӑмлӑ ҫӗршывсенче нихӑҫан та пулма пултарайман пысӑк ҫӳлӗхе хӑпартма условисем ҫителӗклӗ. Капиталисӑмла експлоатаци, пусмӑр условисенче пурӑнакан рабочисем нихӑҫан та пирӗн пек тухӑҫлӑн ӗҫлеме пултараймаҫҫӗ. Мӗншӗн тесен унта ӗҫ савӑнӑҫлӑ мар, унта ӗҫ калама ҫук йӑвӑр, кашни сехет ӗҫсӗр тӑратса хӑварассипе хӑраťаť, ӗҫлесе илнӗ ҫӑкӑр татӑкӗ те унта йӳҫӗ, мӗншӗн тесен, ӗҫсӗр ҫӳрекен, капиталисӑм тискерлӗхӗ ҫаратса, пурнӑҫран кӑларса пӑрахнӑ рабочисем темӗн чухлӗ.

Тӗнчере епӗр ҫеҫ савӑнӑҫлӑн ӗҫлетпӗр, малашлӑх ҫине хаваслӑн та хӑйуллӑн пӑхатпӑр, вӑл пире пур халӑх таланчӗсене те, пирӗн тӑван ҫӗршывӑн пур вӑйне те лайӑхрах чечекленме пулӑшасси ҫинчен пӗлтерсе тӑраť.

А. СТАХАНӐВ, ССР Сойузӗн Верховнӑй Совет депутачӗ.

Сталин ҫӗнтерӳсем тума хавхалантараť

1936 ҫулхи августӑн 13-мӗшӗнче Чкалӑва, Байдукова тата Беļакова Кремļте йышӑннӑ чухне калаҫнӑ сӑмахӗнче Сталин йулташ мана калама ҫук пысӑк хак пачӗ. Манӑн вӑл панӑ хака ӗҫпе—вӗҫевсем, ҫӗнтерӳсем туса тивӗҫлӗ пулас пулмалаччӗ. Сталин йулташӑн сӑмахӗсем манӑн ӑшра ытларах та лайӑхрах ӗҫлес кӑмӑла ҫуратрӗҫ. Епӗ хам ҫӳле вӗҫес тӗлӗшпе тунӑ ҫитӗнӳсене лайӑхлатма шухӑшларӑм.

Ҫавӑн хыҫҫӑн кӗске вӑхӑтрах ҫӳле вӗҫес тӗлӗшпе темиҫе ҫӗнӗ рекорд тума ӗлкӗртӗм. Епӗ Сталин йулташпа курҫа калаҫнине, вӑл етемшӗн ҫав тери тӑрӑшнине йаланах асра тытатӑп.

Сталин йулташпа курса калаҫнисем ҫӗнӗ шухӑшсен, ҫӗнӗ плансен ҫӑлкуҫӗсем пулса тӑраҫҫӗ тата вӗсене пурнӑҫа кӗртме вӑй-хӑват параҫҫӗ.

ВЛАДИМИР КОККИНАКИ,
Совет Сойузӗн Геройӗ.

Вӑрман касакансен ӳсӗмӗ

Ариф Маļļамӑв йулташ Акшкӳлти механизациленӗ вӑрманпункӗнче ӗҫлеме тытӑнсанах хӑйӗн бригадине стахановла ӗҫлекен тума сӑмах пачӗ. Халӗ вӑл хӑйӗн сӑмахне ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртсе пыраť.

Иртнӗ икӗ уйӑх планне Маļļамӑв бригади вӑтамран 273 процент тултарнӑ. Ҫапла кашни кунсерен 28 тенкӗшер ӗҫ укҫи илнӗ.

Ҫак ӳсӗме Маļļамӑв йулташ ӗҫе ҫирӗп тата тӗрӗс йӗркеленӗ май тунӑ. Бригадӑра 42 ҫын. Вӗсене уйрӑм звеносем ҫине уйӑрнӑ. Пӗр звенон звеновочӗ пулса Ариф Маļļамӑвӑн ывӑлӗ Абдул ӗҫлет. Звеносем уйав умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑннӑ хыҫҫӑнах пӗр-пӗринпе ӑмӑртса ӗҫлеме тытӑннӑ. Ӑмӑртура Абдул Маļļамӑв йулташ звени малта пыраť. Вӑл икӗ уйӑхри плана вӑтамран 294 процент тултарнӑ. Камалетдинӑв йулташ звени те нумай кайа йулман, вӑл плана 269 процент тултарнӑ.

Окт̆абӗр уйавӗ умӗнхи ӑмӑртура пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлекенсем йаланах вӑрман касакансем хушшинче те сахал мар. В. Шиминунӑв йулташ икӗ уйӑхри нормӑна 292 процент тултарнӑ. Вӑл окт̆абӗр уйӑхӗнче нормӑна 312 процент тултарса кунсерен 30 тенкӗ те 50 пус ӗҫлесе илнӗ.

Вӑрман турттаракансен Самсемейкин йулташ бригади (6 ҫын) виҫӗ уйӑхри плана 209 процент тултарнӑ. Ку таранччен ҫуллахи ҫулпа турттарса ҫавӑн пек ӳсӗм туни пулман. Кунашкал тӗслӗхсем вуншарӑн илсе кӑтартма пулаť. Вӗсем ӳссех пыраҫҫӗ.

Зверӗв.

Йем. Йарославский

Ленин-Сталин партийӗ—Окт̆абӗрти Социалисӑмлӑ Аслӑ револļуцин организатӑрӗ

1917 ҫулти февраļре-мартра патша йӗркине сирпӗтсе пӑрахнӑ хыҫҫӑн, ун чухне йут ҫӗршывсенче пулнӑ Ленин, мартӑн 16-мӗшӗнче, парти умӗнче ҫакӑн пек задачӑ тӑраť тесе ҫырнӑ: „Республикӑлӑ пропагандӑ, империалисӑма хирӗҫ кӗрешесси, малтанхи пекех пӗтӗм тӗнчери пролетарилӗ револļуцишӗн, „рабочисен депутачӗсен совечӗсем“ (кадетла жуликсем мар) влаҫа кӗрешсе илессишӗн револļуцилӗ пропагандӑ, агитаци тӑвасси, кӗрешесси пулаť“. (Том XX, стр. 6).

Ҫапла ӗнтӗ, февраļти буржуалӑ-демократилӗ револļуцин малтанхи кунӗсенчех Ленин влаҫа советсем кӗрешсе илесси ҫинчен, пролетариат диктатури ҫинчен ыйту лартнӑ.

Ленин емиграцирен Российӑна 1917 ҫулти апрелӗн 3(16)-мӗшӗнче таврӑннӑ. Емиграцирен таврӑнсан тепӗр кунхех Ленин хӑйӗн ҫаплӑ Апрелри тезисӗсене вуласа панӑ. Вӑл тезиссем партипе пролетариата буржуалӑ револļуцирен социалисӑмлӑ револļуци патне куҫмалли револļуцилӗ ҫул кӑтартса панӑ. Ленин пирӗн партине ҫӗнӗ ориентировкӑ парса хӗҫпӑшаллантарнӑ.

„Ленинӑн Апрелри тезисӗсем парти буржуалӑ-демократилӗ револļуцирен социалисӑмлӑ револļуци патне куҫассишӗн, револļуцин пирвайхи етапӗнчен иккӗмӗш етапӗ патне—социалисӑмлӑ револļуци патне куҫассишӗн кӗрешессин генилӗ планне панӑ. Халиччен хӑйӗн пӗтӗм историйӗпе парти ҫак аслӑ задачӑна пурнӑҫа кӗртме хатӗрленсе ҫитнӗ. 1905 ҫултах ӗнтӗ Ленин хӑйӗн „Две тактики социал-демократии в демократической революции“ брошӳринче пролетариат патша йӗркине сирпӗтсе антарнӑ хыҫҫӑн социалисӑмлӑ револļуци тума тытӑнаť, тесе каланӑ. Тезиссенче ҫӗнни ҫакӑ пулнӑ: вӗсем социалисӑмла револļуци патне куҫма тытӑнассин теори тӗлӗшпе никӗсленӗ, конкретлӑ планне панӑ“ („ПСК(б)П историйӗ“, стр 177).

Ленин тезисӗсене хирӗҫ буржуази, меļшевиксем, есерсем урсах кайнӑ. Ленин тезисӗсене хирӗҫ Камӗнӗв, Рыкӑв, Пйатаков йышши пӗчченшер етемсем сиксе тӑнӑ. Вӗсем меļшевиксем пекех, Российӑ социалисӑмлӑ револļуци валļи хатӗрленсе ҫитеймен, Российӑра буржуалӑ республикӑ кӑна пулма пултараť, тенӗ. Вӗсем капиталисӑм влаҫне, буржуази влаҫне ҫаплипех хӑварас позици ҫинче тӑнӑ. Партин Апрелри конференцийӗ вӗсен оппортунисла, Ленина хирӗҫле ҫулйӗрне тӑрӑ пыв ҫине кӑларнӑ. Конференци пур ыйтусем тӑрӑх та Ленин майлӑ пулнӑ.

Ҫак конференцире Сталин йулташ наци ыйтӑвӗ тӑрӑх доклад тунӑ. Сталин йулташ доклачӗ тӑрӑх йышӑннӑ резоļуци рабочи клас партине нумай нацилӗ государства условисенче ӗҫлеме, нацилӗ пусмӑрлӑха пӗтӗмпех пӗтерессишӗн кӗрешме, наци ыйтӑвне татса пама тӗрӗс ориентировкӑ панӑ.

Ленин-Сталин партийӗ умне пирвайхи кӗрешӳпе классен хирӗҫӗвӗсем хушшинче туса пынӑ ҫеҫ (вара ӑна, йулашкинчен, 1917 ҫ. окт̆абӗр тӗлне туса ҫитернӗ) ӑна апрелри манифестацисем урлӑ та, ийуļпе ийуļри демонстрацисем урлӑ та, районсемпе хуласен думисен суйлавӗсем урлӑ та, корнилӑвшчинӑна хирӗҫ кӗрешни урлӑ та, советсене ҫӗнсе илни урлӑ та туса пынӑ“ („Вопросы ленинизма“, стр. 90).

Парти аслӑ штурм валļи ҫакӑн пек политикӑлӑ-массӑлӑ ҫар организацилеме—массӑлӑ револļуцилӗ йухӑма йертсе пырассине хӑй аллинче тытса тӑнипе тума пултарнӑ.

Револļуцине пӗр парти анчах йертсе пымала тӑвас тесен, револļуцине йертсе пырассине пӗр парти, коммуниссен парти аллинче кӑна хӑварас тесен, меļшевиксемпе есерсен соглашатӗлле партисене массӑран уйӑрмала пулнӑ, вӗсене массӑсӑр тӑратса хӑвармала пулнӑ.

Соглашатӗлле партисене массӑран уйӑрса хӑварассине влаҫа рабочисемпе салтаксен депутачӗсен совечӗсен аллине памала тӑвас лозунг тӑрӑх, „советсене массӑсене мобилизацилекен оргӑнсенчен восстани оргӑнӗсем, влаҫ оргӑнӗсем, пролетарилӗ ҫӗнӗ государствӗннӑҫ аппарачӗсем туса хурассишӗн кӗрешни тӑрӑх“ туса пынӑ (Сталин). Массӑсем хӑйсен опытӗнче боļшевиксен лозунгӗсем тӗрӗс пулнине курнӑ. Ҫавӑнпа та револļуци чӑннипе халӑхсен револļуцийӗ пулса тӑнӑ, вӑл мӗлйуншар массӑсене хутшӑнтарнӑ. Ҫавӑнпа та револļуци ҫӗнтерӳлӗ револļуци пулнӑ.

Окт̆абӗр револļуцине хатӗрленес ӗҫре уйрӑмах партин VI-мӗш сйесӗ пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнӑ. Ун чухне Ленинӑн Керенский правительствинчен пытанса пурӑнмала пулнӑ. Ҫак сйесра Сталин йулташ Тӗп Комитетӑн политикӑлӑ отчотне тата политикӑлӑ лару-тӑру ҫинчен доклад тунӑ. Сталин йулташ боļшевисӑмӑн пур тӑшманӗсене те ҫӗмӗрсе тӑкмала отпор панӑ. Троцкис Преображенский тухса каланине хирӗҫлесе, Сталин йулташ ҫапла каланӑ:

„Шӑпах Российӑ социалисӑм патне ҫул хывакан ҫӗршыв пуласси,—тенӗ Сталин йулташ,—пулма пултарманскер мар... Йевропӑ ҫеҫ пире ҫул кӑтартса пама пултараť текен кирелсе кайнӑ шухӑша ыватса йарас пулаť. Догматла марксисӑм тата творчӗствӑлӑ марксисӑм пур. Епӗ йулашкин майлӑ тӑратӑп“ (Протоколы VI с'зда партии, стр. 233—234).

Ҫак сйес партине хӗҫпӑшаллӑ восстани, социалисӑмлӑ револļуци ҫулӗ ҫине тӗллесе йанӑ.

Ленин „Удержат ли большевики государственную власть“ йатлӑ статйара:

„Идейӑсем, массӑна йарса илсен, вӑй пулса тӑраҫҫӗ. Шӑпах та халӗ ӗнтӗ боļшевиксем, урӑхла каласан —револļуцилӗ-пролетарилӗ интернационалисӑм представитӗлӗсем хӑйсен политикипе пӗтӗм тӗнчере ӗҫсыннисен пысӑк массисене малала йаракан идейӑпа ҫавӑрса илнӗ“. (Том XXI, стр. 279).

Ленин—Сталин партийӗн никам ҫӗнтерейми хӗҫпӑшал—марксисӑмленинисӑм пулнӑ. Ҫавӑнпа та парти обшчӗства аталанӑвӗн саккунӗсене лайӑх пӗлсе тӑнӑ, Российӑри халӑх массине ирӗке кӑлармалли ҫула лайӑх курса тӑнӑ.

Халӑх боļшевисӑм хыҫҫӑн пынӑ. Боļшевиксем влаҫа хӑйсен аллине илме пӗлнӗ. Ҫакна вӗсем експлоататӑрсемпе соглашатӗлсем хирӗҫнине пӑхмасӑр, меļшевиксем, есерсем, кадетсем, хамӑр ҫӗршывripe йут ҫӗршывсенчи контрреволļуци пӗр ҫӗре пӗрлешсе хирӗҫнине пӑхмасӑр тунӑ. Ҫак влаҫа вӗсем халӗ 21 ҫул хушши ӗнтӗ хӑйсен аллинче тытса тӑраҫҫӗ, паразитсемпе експлоататӑрсенчен тасалнӑ ҫӗр ҫинче тӗнчери пирвайхи социалисӑмлӑ обшчӗствӑна тӑваҫҫӗ.

Боļшевиксен партийӗ массӑна хӑй йенне ҫавӑрма, вӗсене соглашатӗлсен влийанинчен туртса илме, Аслӑ Окт̆абӗр штурмӗ валļи пӗтӗҫтерме, гражданӑн вӑрҫине илсе тухма пултарнӑ. Боļшевиксен партийӗ йертсе пынипе Российӑ пек пысӑк ҫӗршывра Окт̆абӗрти Социалисӑмлӑ револļуци ҫӗнтерчӗ.

Парти Тӗпкомӗн 1917 ҫулти окт̆абӗрӗн 10-мӗшпе 16-мӗшӗнче пулнӑ ларӑвӗсенче Ленин хӗҫпӑшаллӑ восстани тума сӗннине йышӑннӑ. Ҫак решенине хирӗҫ капитуļантсемпе штрейкбрехӗрсем—Зиновйӗвпа Камӗнӗв тӑнӑ. Троцкий хӗҫпӑшаллӑ восстанине пӗтерсе лартмали сӗнӳ панӑ. Парти Тӗпкомӗ вӗсене пӑхмасӑр восстанине йертсе пыма Партилӗ центр тунӑ. Унӑн пуҫӗнче Сталин йулташ тӑнӑ.

Ленинпа Сталин пӗтӗм револļуцилӗ йухӑма генилӗ йертсе пыни, боļшевиксем тата вӗсем пӗтӗҫтернӗ мӗлйуншар партире тӑман рабочисем, салтаксем, матроссем, чухӑн хресченсем паттӑрӑн кӗрешни, вӗсем хӑйсен пӗтӗм вӑйхӑватне револļуцине парса паттӑрӑн кӗрешни, йухӑма револļуцилӗ ҫапӑҫусенче ҫуралса тухнӑ ленинла ҫамрӑксен организацисем хутшӑнни—ҫаксем пурте вӗсем 21 ҫул каййарах пролетарилӗ социалисӑмла револļуци ҫӗнтермеле тунӑ.

Российӑра Окт̆абӗрти револļуцире ҫӗнтерме вырӑс буржуазийӗ вӑйсӑртарах пулни, вӑл начар организацилени, унӑн политикӑлӑ опытсем сахал пулни те ҫӑмӑллатнӑ.

Хамăр кадрсен идеологилĕ виçине тата политикăлă çирĕплĕхне хăпартассишĕн, боçшевисăма вĕренсе алла илессишĕн!

Савăнăçлă пурнăç пачĕ

Пайанхи куна епĕ çулленхи пекех савăнăçлă ирттеретĕп. Манăн пайан мĕншĕн савăнмалли, мĕншĕн мухтанмалли пур. Вăл—манăн халĕхи пуйан та телейлĕ пурнăç.

Шухăшлатăп та тĕлĕнетĕп: мĕнмĕн курман-ши епĕ хамăн ĕмĕрте. Анне хăçан вилнине астумастăп, аттерен 10 çулта йулнă. 14 çула çитсен (1911 çулта) йалти çынсемпе пĕрле Надеждински чукун шăратакан савăта ĕçлеме пырса кĕтĕм. Ку савăтра икĕ çул ĕçлерĕм. Унтан Ижевски савăта куçса, унта 1918-мĕш çулччен ĕçлесе пурăнтăм. Талăкне 12-шер сехет ĕçлеттĕмĕр. Çавăн чухлĕ ĕçлесе те 60—70 пусран ытла илмен. Çăкăр çиме çитмен, сайра хутра сахăрпа чей ĕçнĕ, аш-какай курман. Иĕркелĕ хватер пулман. Сивĕ, тĕттĕм баракесенче выртса-тăрса пурăннă.

Вĕренме май пулман. Хуçа вĕренме пачах чарăччĕ. „Есĕр вĕренме килмен, ĕçлеме килнĕ", тетчĕç ун чухне пире. Есрe кăшкарса хĕнесе „ăс" панă. Хирĕç калаçатăн—ĕçрен кăларса йарассĕ.

Октаберти революци пусмăрлăха арката, ĕççыннисене ирĕклĕх, пуйанлăх пачĕ. Революци мана чăн-чăн пурнăç пачĕ. Халĕ Октаберти революци 21 çул тултарнине епĕ çĕнĕ, ырă пурнăçра кĕтсе илетĕп. Вăл ырлăхсене Сталинла Конституци панă.

Совет влаçĕ пулнăранпа епĕ хут пĕлекен квалификацилĕ специалис пултăм. Манăн пĕр специальнăç çеç мар, виçĕ специальнăç. Вĕсене пурне те революци хыççăн илнĕ. Иулашки вăхăтра савăтра ответлă вырăнта—ножеточ пулса ĕçлетĕп. Пур ĕç те маншăн чысла та хисеплĕ.

Манăн çемйере 6 çын. Шкул çулне çитнисем 3-шĕ вĕренеççĕ. Хам та вĕренме çӳретĕп. Иртнĕ çулта техминимум кружокĕнчен вĕренсе тухрăм, кăçал стахановецсен шкулне çӳретĕп. Çулсем вапа пулсан та, хама ватă тесе шутлас килмест. Вĕренес те, ĕçлес те килет. Уйăхне 300—350 тенкĕ ĕçлесе илетĕп. Кăçсерен çемйипех хамăрăн клуба кино, спектакль курма кайатпăр. Отпуск вăхăтĕнче сахал мар пысăк хуласене кайса курнă, канмали çуртсенче пулнă. Иртнĕ çулта Кисловодскăра пĕр уйăх хушши курортра кантăм. Лайăх ĕçленĕшĕн парнесем те пĕрре кăна мар илнĕ.

Ăçта, хăш государствăра, хăçан ĕççыннисем пирĕн çĕршыври пек телейлĕ, савăнăçлă пурнăçра пурăннине курма пулат? Çук. Телейлĕ пуйан пурнăç вăл совет çĕршывĕнче çеç. Ана епĕр хавалсемпе çапăçса илнĕ. Хамăрăн Социалисăмла тăван çĕршыва никçан та, никама та памастпăр.

Спасипă, пысăк спасипă çак савăнăçлă пурнăçа туса паракан Сталин аттене!

Петр Тимофейĕв,
Çĕмĕрлери „Боçшевик" савăтри стахановец.

Пирĕн чукун çул

Питех те лайăх астăватăп: пĕр 7—8 çул кайарах Шупашкартан Канаша лашапа кайас пулсан, сахалтан та 2—3 кун иртнĕ. Кĕркунне йе çуркунне çула тухсан, лайăххăн çитетĕп тесе шухăшламалли пулман. Урапа туртийĕ хуçалат-и, йе лаши ывăнса çитет. Çулйĕрсем йапăх пулнă.

Совет влаçĕ чăваш халăхĕн пурнăçне лайăхлатма, хуçалăхне çĕклеме пысăккăн пулăшнипе пирĕн республикă сталинла пилĕкçуллăхсем хушшинче чечекленекен промышлĕннăçлă, шултра йалхуçалăхлă çĕршыв пулса тăчĕ. Чăваш халăхĕ халĕ пуйан та куçтурăлă пурнăçпа пурăнат. Çулсăрлăха пĕтерчĕ. Республикре автомобилсем çӳремен вырăн çук. Канашпа Шупашкар хушшинче татти-сыппиçĕр автомобилсем, автобуссем çӳреççĕ. Виçĕ кунта мар, виçĕ сехетре çитетĕн халĕ Шупашкартан Канаша.

Кăçал вăхăтлăх еиспloатацине кĕрекен Канаш—Шупашкар чукун çулĕ чăваш халăх хуçалăхне малала вăйлатса пымалли услови пулса тăрат.

Чукун çула хута кĕртни йалхуçалăхшĕн тата ĕççыннисен материаллă пурнăçĕпе куçтурлăхне çĕклес тĕлĕшпе те пысăк вырăнта тăрат. Чукун çул пирĕн хапрăксемпе савăтсем туса кăларакан таварсене йала хăвăрт çитерме май парат, йе йал таварĕсене хулана йарассине те нумай çăмăллатат. Трак районĕнчи Субар йалне кĕçĕн вăтам шкул тума чукун çул тăрăх 105 кубла метр йăвăç турттарса пычĕç. Чукун çул тăрăх таварсем турттарнипе 24 пин тенкĕ ытла тупăш илнĕ те ĕнтĕ.

Чукун çула епĕр хамăр вăйпа, хамăр алăпа тăватпăр. Строителствă пуçланнăранпа çĕнĕ çынсем, кадрсем ӳсрĕç. Халĕ кондуктăрсем, машиниссем, стрелочниксем, çулйĕр маçтăрĕсем пулса вуншар чăваш çамрăкĕсем ĕçлеççĕ. Пурте вĕсем чукун çул строителствинче ĕçленĕ вăхăтра квалификаци илнĕскерсем. Хамах илетĕп. Епĕ строителствăра ĕçлеме хам ирĕкпе килтĕм. Малтанах çĕр чавнă çĕрте ĕçлерĕм. Унтан мана пĕр уйăхлăх курса йачĕç. Курсран вĕренсе тухсан лини сарнă çĕрте Чижов йулташ меслечĕпе ĕçлесе нормăна йалан 150 процентшер тултарса пыраттăм. Стахановец пултăм.

Роман Йемелйанăв,
Шупашкар станцинчи стахановец.

Хасан кӳлли патĕнчи çапăçу участникĕсен çырăвĕсем

Çак кунсенче Санарпуçĕнчи (Вăрнар р.) Литвинăв йачĕпе тăракан колхоз членĕсем I-ш Приморски арминчи Михаил Солдатăв бойецран çыру илнĕ. Вăл хăйсен йалĕнчи колхозниксемпе колхозницăсем патне çакăн пек çыру йанă.

„Иулташсем! Хасан кӳлли районĕнче Йапони самурайĕсем пирĕн Совет территорийĕ çине тапăнса кĕме пăхрĕç. Пирĕн Хĕрлĕ Çар вĕсене питĕ хытă çапса аркатрĕ. Çак çапăçура епĕ те пулса, ирсĕр йапонĕцсене хамăн артиллерилĕ вут-хĕмпе тĕл персе вăйлăн аркатрăм. Вĕсем тарса хăтăлма пултараймарĕç. Йапонин çĕленкалтисем шутласа кăларайми тăкăнса йулчĕç, вĕсене пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар тĕп турĕ. Епĕ те вĕсемпе хире-хирĕç пулса пурнăçа шеллемесĕр, мĕнпур вăйпа çапăçрăм.

Йулташсем! Пирĕн Хĕрлĕ Çар хăватлă тата никам çĕнтерейми вăйлă, унăн вăйĕ: вăл халăх çарĕ пулнинче, вăл таччăн пĕтĕçсе тăнинче. Хĕрлĕ Çар службинче пуласси пирĕн тăван çĕршыв гражданинĕн хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрат.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар аслă тăван çĕршывăн ĕççыннисен мирлĕ пурăçне сыхласа тăрат. Хĕрлĕ Çара совет çамрăкĕсем пысăк хаваслăхпа кайаççĕ. Чикĕсене сыхланă çĕрте пиччĕшĕ вилсен, унăн вырăнне шăçнĕ пырат. Шăçнĕ пиччĕшне улăштарат,—çакăн пек пирĕн социалисăмлă çĕршывăн патриочĕсем. Тăван çĕршыва сыхлас ĕçре вĕсем хурçă стена пекех çирĕп тăраççĕ.

Колхозниксемпе колхозницă йулташсем! Колхозра нимĕн шиксĕр ĕçлĕр. Вăйлă тырпул туса илессишĕн кĕрешĕр, районри ытти колхозсем хушшинче малти ретре пулассишĕн тăрăшăр. Совет çĕршывĕн чиккисем хурçă çăрапа питĕрĕнсе тăраççĕ. Тăшман провокаци туса пирĕн çĕршыв çине тапăнма тăрсан, пирĕн Хĕрлĕ Çар ăна вăл ăçтан килет çавăнта, хăйĕн çĕрĕ çинчех çапса салатса тĕп тăват.

Михаил Солдатăв."

* * *

„Трудовик" колхоз членĕ (Елĕк р.) Архип Çергейĕв йулташ Хĕрлĕ Çарта пурăнакан, Хасан кӳлли патĕнчи çапăçура пулнă хăйĕн Филимон йатлă ывăлĕнчен çыру илнĕ. Çырура çапла çырнă:

„Хаклă тăвансем! Епĕ Хĕрлĕ Çара килни 2 çул çитесси инçе йулмарĕ ĕнтĕ. Хĕрлĕ Çара килнĕренне епĕ сахал мар вĕрентĕм. Хĕрлĕ Çар маншăн чăн-чăн шкул пулса тăчĕ. Епĕ куншăн питех те савăнатăп. Маншăн пуринчен те пысăк савăнăç вăл—епĕ Инçет-Хĕвелтухăçĕнче пограничник пулни. Пограничник пулса епĕ Хасан кӳлли патĕнчи çапăçура та пултăм.

Тăван çĕршывăн—Совет Сойузĕн чиккине пĕр шиксĕр çивĕччĕн сыхларăмăр. Йапони самурайĕсене пирĕн çине килме тăрсанах çивĕч отпор патăмăр. Епĕр пенĕ кашни пуçă тата хамăрăн вăйлă алăмăрсемпе çивчĕ хĕçсене хĕрӳлĕн сулса йани ахаçь пулмарĕ, вĕсем пурте кирлĕ вырăна лексе, кирлĕ ĕç тунă.

Епĕр пурте пĕр шутлă пулса ĕçхалăх ирĕклĕхĕшĕн, тăван çĕршывшăн, халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташшăн çине тăрса çапăçрăмăр. Çапăçура ССР Сойузĕн Оборонă Халăх Комиссарĕн Ворошилăв йулташăн сăмахне асра тытса, тăшман ăçтан килчĕ, ăна çавăнтах отпор патăмăр. Епĕр çĕнтертĕмĕр.

Атте, анне, хаклă тăвансем, есĕр колхозра хĕрӳлĕн ĕçлĕр. Епĕр тăван çĕршыв чиккине лайăх сыхлатпăр. Пире пĕр пусăм йут, çĕр те кирлĕ мар, хамăр çĕре те пĕр вершук та памастпăр. Епĕр миршĕн, лăпкă саманашăн!

Приморски №-чаçри красноармеец, сирĕн ывăлу **Филимон**".

Канашри вакунсем йусакан савăтри стахановецсем: **В. С. МОРУНОВ** (сулахайри) тата **А. ГОЛУБĔВ**. Иккĕшĕ те клепаçьщчиксем, ĕç нормине 250 процент тултарса пыраççĕ.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Кадрсем ӳсеççĕ

Патша Российĕн нацилĕ районĕсенче аслă шкулсем пулман.

Чăваш ĕççамрăкĕсемшĕн аслă шкул алăкĕсем хупă тăнă.

Аслă Октабĕр революцийĕ çеç пирĕн çĕршыври халăхсене телейлĕ пурнăç çулĕ уçса пачĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн тăван çĕршывра аслă шкулсăр пĕр республикă та çук.

Советлă Чăваш республикинче халĕ виçĕ аслă шкул, ăслăлăхпа тĕпчев институчĕсем темиçе ĕçлеççĕ.

Чи пысăк аслă шкулсенчен пĕри вăл—чăвашсен 1930 çулта уçнă педагогикăлă институчĕ. Çак çулсем хушшинче педагогикăлă институт пысăк утăмсем турĕ. Малтанхи çул института вĕренме 110 çын кăна илнĕ пулсан, халĕ кунта 1100 çын вĕренет, урăхла каласан, институт 8 çул хушшинче 10 хут ӳсрĕ.

Паллах, ку ӳсĕм тата пысăкрах пулнă пулĕччĕ, кунта нумай çул хушши халăх тăшманĕсем хуçа пулса сăтăрласа пурăнман пулсан. Буржуалă-националисла ирсĕрсем республикă ваçьçи кадрсем хатĕрлес ĕçе сахал мар аркатнă, институтăн хуçалăх никĕсне, ăслăлăхпа тĕпчев ĕçне хавшатнă, ăслăлăх кадрĕсене хатĕрлес ĕçе пăтраштарса йанă.

Халĕ институтпа унăн коллективĕ умĕнче тăшмансен сăтăрлă ĕçĕсен йулăшкийĕсене пĕтерес, института чăн-чăн боçшевикла ĕçлекен аслă шкул тăвас задачă тăрат. Институт ку задачăна пурнăçлама тытăннă. Епĕр халĕ тăшмансен йулашкийĕсене пĕтерсе, вĕренӳ ĕçне тĕпрен лайăхлатас, институтра социалисăмлă ăмăртăва малала вăйлантарса пырас, студентсен йăлапа пурнăç условисене лайăхлатас, ăслăлăх кадрĕсен квалификацине хăпартас тĕлĕшпе ĕçлетпĕр.

Пирĕн çак пысăк задачăсене пурнăçлас тесен, хамăрăн идейăлă политикăлă çӳлĕлĕхе хăпартмала, боçшевисăма çавăрса илмеле.

Совет влаçĕ пире аслă пĕлĕве çавăрса илме мĕн кирлине пурне те туса панă. Çулсерен пире правителствă темиçе мелйуншар тенкĕ укçа парат. Пире лайăх çуртсем, лайăх общежитисем туса панă. Вĕрен, ăслăлăх çулĕпе малала кай!

Çак çула пире Октабĕр революцийĕ, аслă совет влаçĕ уçса панă.

Халăх шанса панине тӳрре кăларасси, çĕршыва çителĕклĕ хатĕрленнĕ, пысăк пĕлӳлĕ, боçшевисăмпа çирĕп хĕçпăшалланнă кадрсем парасси—пирĕн хисеплĕ те мухтавлă ĕç.

Нейман,
Чăвашсен Государствăлă Педагогикăлă Институчĕн директăрĕ.

Октаберти революцире çĕнтерме Российăра икĕ революцире кĕрешсе пиçĕхнĕ революцилĕ пролетариат пулни пысăк май панă. Вăл миршĕн, ирĕкшĕн, социалисăмшăн кĕрешсе хăй йенне хуларипе йалти мĕлйуншар ĕççыннисене çавăрнă. Рабочи клас, революци çулпуçĕ йенче хресченсен пысăк масси—чухăн хресченсем пулнă. Вĕсем „Российăра помещиксемпе сыхăнса тăман, хресченсен нушисене пĕтерес тесе помещиксене лапчăтса лартма хатĕр тăракан парти пĕрре кăна пуррине,—вăл боçшевиксен партийĕ пулнине курса ĕненме" пултарнă (ПСК(б)П историйĕнчен).

Октаберти социалисăмлă революци çĕнтернин тĕп сăлтавĕ вăл—Российăра Ленинпа Сталин тунă боçшевикла парти пурри пулнă.

Боçшевиксен партийĕ революцилĕ марксисăм-ленинисăм теорипе хĕçпăшалланман пулнă пулсан, вăл обшчĕствă аталанăвĕн саккунĕсене, революци саккунĕсене пĕлсе тăман пулнă пулсан, вăл восстани искусствине вĕренсе çитмен пулнă пулсан, çакăн пек çĕнтерӳ пулма пултарайман. Восстани искусствине парти Маркспа Енгĕçс кăтартса панисем тăрăх вĕреннĕ.

„Рабочи клас пуçĕнче политикăлă кĕрешӳсенче тĕрĕсленнĕ парти, боçшевиксен партийĕ тăнă. Боçшевиксен партийĕ пек парти кăна, халăха татăклă штурма илсе тухма çителĕклĕ таран хăйулă, тĕллев патне çитмели çул çинчи чăрмантаракан пур йышши тата пур тĕрлĕ чулсем патĕнчен те пăрăнса иртме çителĕклĕ таран сыхланулă парти кăна, çакăн пек парти кăна революцилĕ тĕрлĕ йухăмсене: миршĕн пыракан пĕтĕмĕшлĕ-демократилĕ йухăма, помещиксен çĕрĕсене туртса илессишĕн пыракан хресчекле-демократилĕ йухăма, пусмăрти халăхсен нацилĕ пĕртанлăхĕшĕн пыракан нацилĕ-ирĕклĕхлĕ йухăма тата пролетариатăн буржуазине сирпĕтсе антарассишĕн, пролетариат диктатури туса хурассишĕн пыракан социалисăмлă йухăмне революцилĕ пĕтĕмĕшлĕ пĕр йухăма пĕлсе пултарулăн пĕрлештерме пултарнă" (ПСК(б)П историйĕнчен).

Пайан епĕр совет государстви 21 çул тултарнине уйавлатпăр. Çак 21 çул хушшинче боçшевиксен партийĕ, Октаберти Социалисăмлă революци умĕн унăн членĕсем пурте чĕрĕк мĕлйуна йахăн çеç пулнинчен хаçьхи вăхăтра чи вăйлă, хăватлă, тĕнчĕн улттăмĕш пайĕнче çĕнтерӳлĕ социалисăм строителствине йертсе пыракан парти пулса тăчĕ. Çак çулсем хушшинче боçшевиксен партийĕн вăйĕ, унăн пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисен куçĕ умĕнчи авторитечĕ гигантла ӳсрĕ. Парти ленинисăм тăшманĕсене хирĕç кĕрешсе ӳссе тĕреклленчĕ. Октабĕр умĕн унăн речĕсенче тăрса ăна хирĕç кĕрешнĕ етемсем контрреволюцин шăршлă лачакине кĕрсе ӳкрĕç, фашисăм лагĕрне куçрĕç, шпионсен, çынвĕлеренсен, сăтăрçăсен банди пулса тăчĕç.

1917 çулти нойабĕрĕн 7-мĕшĕнче (октаберĕн 25-мĕшĕнче) Ленин Петроград Совечĕн ларăвĕнче: „Пайантан Российă историйĕнче çĕнĕ тапхăр пуçланат, вырăсен çакă виççĕмĕш революцийĕ хăйĕн йулашки итогĕнче социалисăм çĕнтересси патне илсе пымала",—тенĕ. (Том XXII, стр. 4).

Совет Сойузĕнче социалисăм çĕнтерчĕ.

Социалисăм пĕтĕм тĕнчипе çĕнтерет.

Ирĕклĕ çĕр çинче

Халĕ йал варринче пысăк тăптăваткăл кӳлĕ çуталса выртат. Ун йĕри-тавра решеткĕ çапса карта тытнă. Тăрна куçĕ пек таса шыв çине, кĕрхи вăйлă çилпе вĕçсе килсе, ылттăн тĕслĕ йамра çулçисем ӳкеççĕ.

Çулахи çутă, кăвак пĕлĕтлĕ уйар кун çак тăваткăл шыв талккишĕ тĕпсĕррĕн курăнат. Лăпкă, тӳлек каçсенче кӳлĕ хĕрринче Шаккăл çамрăкĕсен тулли кăмăллă йуррисем йанăраççĕ.

И, çӳлĕ те, çӳлĕ тӳпере
Çăлтăрĕсем çунса çуталаç...
Пирĕн тусăмăрсем чикĕре
Тăван çĕршыв чысне хураллаç.

Тепĕр чухне тата çак çутă кӳлĕ симĕс кавирпе витĕннĕ çĕр питне пысăк чӳрече касса кантăк лартнă пек те курăнат. Шыв тăваткăлĕн пĕр кĕтессинче шурăмпуç çăлтăрĕ йăлтăртатса выçьат. Тикĕс çыран хĕррипе мăшăррăн-мăшăррăн шурă çипуç тăхăннă çамрăксем пыраççĕ. Колхоз çамрăкĕсен йуратăвĕ туллин чечекленет...

Анчах епĕр çак вырăнтан кайала çаврăнса пăхсассăн, йăлтах урăхла картинăсем куратпăр.

Çирĕмпĕр çул ĕлĕкрех хаçьхи кӳлĕ вырăнĕнче Шаккăл пасарĕ кĕрленĕ. Пасар плошчĕтĕн кăнтăр йенче (кивĕ Российăри мĕнпур пасарсенчи пекех) лапас йевĕрлĕ хупах ларнă. Кунта, Шаккăл йе Йумансар йе Пикших çынни, хăйĕн йе çăпата, йе сурăх, йе кăçалхи пăрушкине сутнă укçипе ĕçсе ӳсĕрĕлсе, хĕсĕк пурнăçшăн чунĕ тарăхнине пусарас тесе, „бывали дни веселые..." йурланă.

Кивĕ Российăри хупахсен чапĕ пĕтĕм тĕнчипе сарăлнă, мĕн пур чĕлхесенче ăна "трактир" тенĕ.

Шаккăл ĕççыннисем астăваççĕ. Петр Васçилйĕв тытакан хупахра пайтах çын хăйĕн пур пек, çук пек пурлăхне ĕçсе пĕтерсе, тĕнче тăрăх çапкаланма тухса кайнă.

Çирĕмпилĕк çул ĕлĕкрех (нумай та мар вĕт-ха вăл, епĕр ĕнтĕ 21 çул совет саманинче пурăнатпăр), Шаккăл йалĕнче, хупах хуçипе пилĕк-ултă кулакăн çурчĕсемсĕр пуçне, пĕтĕмпех хура пӳртсем пулнă. Хĕллехи шартлама сивĕ кунсенче вара, хура кăмакасене пурте пĕр тăрук хутса йарсан, Шаккăл йалĕ теменле усал тĕлĕк пек, тамăк хуранĕ пек мăкăрланнă.

Йалăн çурçĕр йенче, çак хура пӳртсен йăвăр сывлăшне йăвăрлатса, чиркӳ ларнă. Вырсарни кунсенче тĕттĕм айне путнă йал çийĕн чан сасси кĕрленĕ.

Аслă Октабĕр революци помещиксемпе капиталиссен пусмăрне çапса аркатрĕ. Шаккăл ĕççынисем, çĕршыври ытти темиçе мĕлйун хресченсемпе пĕрле, Ленин декречĕ тăрăх çĕр илчĕç.

Ирĕклĕ çĕр çинче ирĕклĕ пурнăç ӳссе чечекленчĕ.

Усламçăсен ĕççыннисене çаратмалли пасар вырăнĕнче Шаккăл хресченĕсем талкăшĕпех кӳлĕ алтрĕç.

Кулаксене-куштансене совет çĕрĕ çинчен тăпăлтарса пăрахса, чухăнпа вăтам йал-йыш колхоза пĕрлешрĕ.

Совет хĕвелĕ айĕнче Шаккăл çут-çанталăкĕпе çĕрĕсем те улшăнчĕç, çĕнелчĕç, лайăхланчĕç. Ĕлĕкхи вăхăтра йалта пĕр 10—12 килĕн кăна çăкăр çĕнĕ тырра çитсе пынă.

— Хĕл варринче пирĕн йал çыннисем çăкăр шырама айаккала тухса кайнă,—тет Алексейĕв бригадир.

Шаккăлăн çырма-çатралă, хăйăрлă, тăмлă, чуллă çĕрĕсем çултан-çул ытларах вырăнаса пынă. Кĕске тырпула, хаçьхи пек машинăпа мар, чĕркуçланса ларса алăпа тăпăлтарса пуçтарнă. Тулă акса тăвасси çинчен шаккăлсем ĕмĕтленмен те.

Ĕлĕк гектартан 20—30 пăт панă çĕрсем халĕ 80—100 пăт параççĕ.

Ĕлĕк хупах пулнă çуртра халĕ феçьдшĕр пункчĕ, ача çуратмалли вырăн, трахом пункчĕ.

Ĕлĕк чалăш лавкасем ларнă вырăнта халĕ йалсовечĕпе колхоз правленин çурчĕ, хĕрлĕ кĕтес, вулав çурчĕ, кунсăр пуçне кăçалах пысăк клуб пулат.

Ĕлĕк пуп пурăннă çуртра халĕ учителсен хватерĕсем.

Хурал пӳрчĕ пулнă вырăнта халĕ перекет касси, пуштă уйрăмĕ, телефон.

Çак çулсенче йалта вăтам шкул ӳссе çитĕнчĕ.

Хура пӳртсем вырăнне колхозниксем лайăх, çутă, пысăк çуртсем лартрĕç. Колхоз пуçланнăранпа çеç йалта 50 хуçалăх пилĕк стеналă çуртсем лартнă.

Вăйлăн ӳсет куçтурă. Ĕлĕк йалта хут пĕлекенсем 5—6 çынтан ытла пулман, халĕ 7 çынсăр пуçне пурте хут пĕлеççĕ. Ĕлĕкхи вăхăтра йалта пĕртен-пĕр „куçтурăлă" çын шутланнă пуп та хаçат çырăнса илмен, халĕ ĕнтĕ хаçат илсе тăман хуçалăх çук та пекех.

Çамрăксем хĕрӳлĕн ĕçлеççĕ, хĕрӳлĕн вĕренеççĕ, ваттисем те кунта ватăлмаççĕ. Ĕлĕкхи вăхăтра никамсăр йулнă ватă çынсем уйрăмах мăшкăл, асап тӳснĕ, нумай чухне выçса та вилнĕ. Шаккăлсем астăваççĕ: Йакку старик 70—80 çула çитсе, „Варвари аппа" (йалта ăна çапла чĕннĕ) 70 çула çитсе, „Матĕрне аппа", ывăлĕ чахоткăпа вилнĕ хыççăн, пĕччене йулса, хăрушă, выçă пурнăçпа асапланса вилнĕ. Вĕсене никам та пăхман.

Кунашкал ватă çынсене хаçьхи вăхăтра Сталинла Конституци хӳтĕлет. Акă, куçсăр пулнă 75 çулхи Шандарăвă Натука, 72 çулхи Шемжерăвă Марийене тата ытти çакнашкал тăлăха йулнă ватă çынсемпе ачасене колхоз çулсерен тырпулпа тĕрлĕрен çимĕçсем парса пулăшат.

— Спаçипах колхозне,—тет Шемжерăвă, колхоза çапла пулăшнăшăн тав туса. Вăл ватă пулин те хăй йенчен колхоза мĕнле те пулин пулăшма тăрăшат. Вăл хăй ирĕкĕпе тухса ĕçлесе кăçал 54 ĕçкунĕ тунă.

65 çула çитнĕ тăлăх кинеми Куçмина Марийе кăçал 130 ĕçкунĕ туса, колхозран преми илнĕ.

Ĕççыннисемшĕн колхоз—чи çывăх, чи йуратнă тăван кил. Хирти ĕçсене пĕтернĕ хыççăн кăçал Шаккăлти „Хĕлхем" колхоза çĕнĕрен 25 хуçалăх кĕчĕ.

Совет государстви ĕмĕрлĕхе панă ирĕклĕ совет çĕрĕ çинче колхозниксем хăйсен пултарулă, хаваслă, телейлĕ пурнăçне малала çитĕнтерсе пыраççĕ.

Таса кӳлĕ çумĕнчи плошчĕте Шаккăл ĕççыннисем пайан митинга пухăнаççĕ. Кунта пайан колхозри стахановецсем, бригадирсем хăйсен саламлă сăмахĕсенче пуринчен малтан çак çĕр çинчи чи аслă, чи мухтавлă, ĕççыннисен чи йуратнă çыннине, халăхсен çулпуçне Сталин йулташа тавтăваççĕ—лайăх пурнăçшăн, социалисăмлă тăван çĕршывăн аслă çĕнтерĕвĕсемшĕн.

Аркади ĔÇХĔЛ.
Шаккăл, Канаш р.

Аслă шкул алăкĕ уçă

Амăшĕ савăнăçлăн калат:

— Епĕ хамăн ачасем çине пăхса хĕпĕртетĕп. Ывăлăмсем тăваттăшĕ те инженер, хĕрача врач пулса ĕçлет. Совет влаçĕ пулман пулсан, манăн ачасем аслă шкулта вĕренесси çинчен шухăшлама та пултарайас çукчĕ.

Пăрмас çыннин (Куславкка районĕ) В. Горчаковăн икĕ ывăлĕ Мускавра, иккĕшĕ Ленинградра пурăнаççĕ. Хĕрĕ Архангĕлскра. Аслă ывăлĕ, Александр, çар академийĕнчен, хĕрлĕ профессурă институтĕнчен тата пĕтĕм тĕнчери хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнăскер, халĕ ССРС Наукăсен Академийĕнче ĕçлет.

1918 çулта, пĕтĕм çĕршыв тăшмансене хирĕç революцилĕ вăйхăватпа кĕрешнĕ вăхăтра, Александр Горчаков хăйĕн тăван пиччĕшĕпе Орефийпе пĕрле ирĕклĕн граждăн вăрçине фронта тухса кайат. Контрреволюцине хирĕç хайăррăн çапăçнă чух Александр тăван пиччĕшне вăрçă хирĕнче ĕмĕрлĕхех çухатат. Совет влаçĕн тăшманĕсене çапса салатнă хыççăн ирĕклĕ тăван çĕршывра Александрăн вĕренӳ çулĕ пуçланат.

Аслă çулпуç В. И. Ленин:—Вĕренмеле, вĕренмеле татах вĕренмеле,—тесе хушса хăварнине ăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пырат.

Вăтам тата аслă шкулсенче вĕренесси çулран-çул сарăлса пырат. Сталин йулташ, социалисăм строителствинчи ытти пысăк ĕçсемпе пĕрлех, аслă шкулсен ĕçне лайăхлатассине те питĕ çӳле вырăна хурат.

Пирĕн республикăра аслă шкулсенчен вĕренсе тухса, инженер, тата ытти пысăк специалиссен йатне илме тивĕçлĕ пулнисен, аслă шкулсенче вĕренекенсен хисепĕ вăйлăн ӳсет. Октаберти революциччен чăвашсем хушшинче рабочипе хресчен килйышĕсенчен инженер йатне илтме тивĕçлĕ пулман. Халĕ ак пĕр çемйере, Горчаков çемйинчех аслă шкултан вĕренсе тухнисем пилĕккĕн. Александрăн тăванĕсем: Иулийа—медицина институтĕнчен, Антон - електротехникă институтĕнчен, Григорий—политехникă институтĕнчен, Иван—автодор институтĕнчен вĕренсе тухнă. Халĕ вĕсем пурте социалисăм строителствин ответлă участкисенче ĕçлеççĕ. **В. Деферан.**

Хасан кӳлли патĕнчи çапăçусенче пулнă лейтенант Ф.К. Пушкин йулташ Шупашкарта

Хасан кӳлли патĕнчи çапăçусенче пулнă лейтенант Ф. К. Пушкин йулташ—Чăваш республикĕнчен. ССР Сойузĕн правитĕлстви Ф. К. Пушкин йулташа Хасан кӳлли патĕнчи çапăçусенче паттăр пулнăшăн Хĕрлĕ Çалтăр орденĕпе наградалана. Ф. К. Пушкин йулташ нойаберĕн 5-мĕшĕнче Шупашкара çитрĕ. Вăл „Чăваш Коммунĕ" редакцине пулса, редакцинче ĕçлекенсене Хасан кӳлли патĕнчи çапăçусем çинчен каласа пачĕ.

Апат-çимĕç промышлĕннăçĕн ӳсĕмĕ

Республикăри апат-çимĕç промышлĕннăçĕ 10 уйăх планне 119,6 процент тултарчĕ. Вăл шутран „Чăвашмелђтрест" çулталăк планне 125,8 процент, Çĕмĕрлери квас савăчĕ 124,5 процент тултарнă. Уйрăмăнах плана тултарассипе Улатăрти, Сийавăри, Йĕпреçри, Йелчĕкри армансем лайăх ĕçлеççĕ. Улатăрти арман çулталăк планне 201 процент, Йĕпреçри—142 процент пурнăçланă. 10 уйăх планне Йетĕрнери çу савăчĕ 160,2 процент, Крахмалтрест 136,5 процент тултарнă.

Çав вăхăтрах начар ĕçлекен предприйатисем те пур-ха. Шупашкарти макарон хапрăкĕ 10 уйăх программине пĕтĕмпе те 74,7 процент, пулă хуçалăхĕ 84,5 процент, „Техжиркорм" кантурĕ 69,5 процент çеç тултарчĕç. Канаш, Шупашкар, Йелчĕк районĕсенчи армансем, Канашри пренĕк хапрăкĕ, Кĕтеснертипе Хĕрлĕ Чутайри çырла пĕçерекен савăтсем те йапăх ĕçлесе пыраççĕ.

Йапăх ĕçлени пĕтĕмпех предприйати руководитĕлĕсенчен килет. Вĕсем пайанхи куна та Облăçри 19-мĕш партконференци решенине пурнăçлассишĕн кирлĕ пек ĕçлени курăнмаст-ха.

Красилђникăв,
ЧАССР Апат-çимĕç промышлĕннăç Халăх Комиссарĕ.

Çĕнелнĕ Турханта

ÇĔМĔРЛЕ. Турханти „Комбинат" колхоз колхозникĕсем аслă уйава йалхуçалăх ĕçĕсене вĕçленипе, государствă умĕнчи обйазатĕлствăсене тултарнипе кĕтсе илчĕç.

Колхозниксем тăрăшса ĕçлени пысăк тухăç пачĕ,—кăçал кашни гектартан 17 центнĕр ыраш пуçтарса кĕртнĕ. Колхоз та, колхозниксем те государствă умĕнчи обйазатĕлствăсене тултарнă, укçа-тенкĕсене парса татнă.

Колхозниксем пуйан та кулђтурăлă пурăнаççĕ. Колхозăн ĕне фермиі тата пысăк утар пур, утарта 443 вĕлле,—вĕсем пысăк тупăш параççĕ. Çак иртнĕ кунсенче колхозниксем ĕçкунĕ тăрăх пыл илчĕç.

Ĕне ферминче ĕçлекенсем ĕнесенчен сĕт нумайрах суса илессишĕн социалисăмлă ăмăртса ĕçлеççĕ. Верă Миронăвă йулташ фермăра кăçалхипе çичĕ çул ĕçлет. Унăн кăçал пилĕк ĕнерен 6.500 литр сĕт суса илмеле пулнă, вăл 10 уйăх хушшинчех 11.980 литр суса илнĕ. Çакăн пек пысăк тухăçлă ĕçлекенсем колхозра кашни ĕçрех пур.

Колхозăн халђ 3 грузовик. Пĕлтĕр пысăк клуб туса лартнă. Клубра кулленех ĕç вĕресе тăрат. Кунта колхозниксемпе колхозницăсем хаçат-журнал, кĕнекесем вулаççĕ, радио итлеççĕ, шашкăла, шахмăтла выљаççĕ.

Турхан йалне халђхи вăхăтра 400 екземплђар хаçат, 47 екземплђар журнал килсе тăрат. Йалти çамраксем пит нумайĕше ватам тата аслă шкулсенче вĕренеççĕ, нумайĕшĕ инженерсем, љотчиксем, учитĕлсем т. ыт. те пулса ĕçлеççĕ. Иалта халђхи вăхăтра 20 учитĕл, фелђдшĕрсем 2, агрономсем те пур.

Йакăвлĕв.

Пирĕн аслă правасем

Савăтра епĕ сакăр çул ĕçлетĕп. Çак çулсем хушшинче манăн пурнăçра çав тери пысăк улшăнусем пулчĕç. Манăн нимĕнле специалђнăç та пулман, епĕ хута сахал пĕлнĕ. Халĕ епĕ хутла пĕлекен квалификацилĕ рабочи, машинис пулса ĕçлетĕп.

Политикăла пĕлӳ йенĕпе те чылай ӳсрĕм. Халĕ хам тĕллĕн Ленин—Сталин çырнă произведенисене вуласа вĕренетĕп. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ комсомол комитет çекретарĕ пулса ĕçлетĕп, поçолкă совет членĕ.

Савăт коллективĕ манăн ĕçе хаклат. Сахал мар парнесем панă 8 çул хушшинче 3 хутчен курортсенче, 3 хутчен канмали çуртсенче пултăм.

Совет влаçĕ çынсене пулăшат, вĕсемшĕн тăрăшат, мĕншĕн тесен, çын—чи хаклă пурлăх. Çакна епĕ хамăн пурнăçра туйатăп.

Пайан манăн çакна калас килет: чечеклентĕр, тĕреклентĕр çĕршыв! Епĕр телейлĕ çĕршывăн пĕр лаптăм çĕрне те никама та памастпăр.

Гераçим Максçимăв.
Вăрнарти фосфорит савăтĕнчи стаханăвĕц-машинис.

Çултан çул тултарса пырат

Строитĕлствă деталĕсем тăвакан Шупашкарти савăт хăйĕн производствă планне çултан çул тултарса пырат. Кăçал савăтра производсвă ĕçне механизацилес йенĕпе чылай ĕçсем тунă. Çакăн хыççăн тата Октабĕр уйавĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнсан савăт коллективĕ тата пысăк тухăçлăхпа ĕçлеме пуçларĕ. Çулталăкри плана нойабĕрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 95 процент тултарнă.

Шупашкар хулинчи 12-мĕш номĕрлĕ ача сатĕнче. Ачасем вăхăта савăнăçлă ирттереççĕ.

Г. Костин фото-ӳкерчĕкĕ.

Уйăп Мишши

ОКТĂБĔР ЙУРРИ

Йанрат йанкăс йурă
Çĕршыв тăршшипе,
Йанрат вăл
Мĕн пур тĕнчене илтĕнсе,
Октăбĕр хĕвелĕн
Хĕрӳ ăшшипе
Телейлĕх тĕнчи
Чечекленни çинчен.

Çак кун тулнă
Пусмăр тĕнчийĕн шăпи.
Çак кун ăна ишнĕ
Тĕпрен çĕмĕрсе.
Çак кун кĕрĕслетнĕ
„Аврорă" туппи
Çĕн ĕмĕр пуçламĕш
Çинчен пĕлтерсе.

Пайан савăнат
Ман çĕршыв уйавра,
Çĕршыв уйавлат
Хăй çуралнă кунне.
Антив, кĕркунне пултăр
Çанталăкра,
Анчах чĕрере, çĕршывра—
Çуркунне.
Нихçан та хĕвел
Кун пек çутă пулман,
Çак чаплă ĕмĕр
Çĕр çине киличчен.
Никам пирĕн пек
Халиччен пурăнман,
Никам пирĕн пек
Йурламан халиччен.

Çĕнмешкĕн
Хайар, йăвăр кĕрешӳре
Манми аслă Ленин
Вĕрентнĕ пире.
Ĕçре пирĕн
Аслă çула çутатса
Хĕвелĕмĕр Сталин
Пырат çул тытса.

Çĕршыв! Сан хастарлă
Хĕр-ывăлусем
Мухтавлă чап илчĕç
Тĕнче умĕнче.
Тĕнче тӳпи урлă
Çул хыврĕç вĕсем,
Вĕçеç никамран хăвăрт,
Çӳлĕ, инçе.
Фашисăм Испани çĕрне
Çĕмĕрет.

Фашисăм Китай çĕршывне
Çунтарат.
Хăйне ылханпа
Витнĕскер, ĕмĕре,
Кунта куç хывса,
Сĕлехе йухтарат.

Ав, сĕмсĕр сысна—
Самурай, сăмсине
Килсе чикме пăхрĕ
Çĕршывăм çине.
Анчах пирĕн çĕр
Самурайсемшĕн мар,
Ăс пачĕ аван вĕсене
Хĕрлĕ çар.

Часах манас çук-ха
Вĕсем, Хасана,
Анчах епĕр хатĕр,
Кĕç пирĕн çине
Фашисăм тата килме
Шут тытсанах
Аçтан килнĕ—унтах
Тупĕ хăй вилĕмне.

Кремљ çăлтăрĕсем
Çутатаç инçене.
Кураççĕ ăна
Пусмăрти ĕççынсем.
Ылханлă, куççуллĕ
Тискер тĕнчене
Ишсе аркатма
Çĕкленеççĕ вĕсем.

Çĕршывăм пайан
Хăй вăйне тĕрĕслет.
Çĕршыв саламлат
Уйавсен уйавне.
Çĕрçитмĕл мĕлйунлă алпа
Вăл çĕклет
Социалисăмăн
Çут йалавне.

Октăбĕр хĕвелĕн
Хĕрӳ ăшшипе
Çĕршыв чечекленчĕ,
Телейлĕ çынсем.
Йанра, йанкăс йурă,
Çĕршыв тăршшипе
Мала чĕнекен йалав пек
Çĕкленсе!

Испани хăнисем Мускавра

Нойаберĕн 5-мĕшĕнче ирхине Мускава Октăбĕр уйавĕнче пулма Испанири паттăр халăхăн делегацийĕ çитнĕ. Ленинград вокзалне пойăс çитиччен чылай малтан столицăри ĕççыннисем пухăннă. Çамрак работницăсем чечексемпе пынă.

Пухăннă çынсем хăнасене ăшшăн кĕтсе илнĕ. Хăнасем хушшинче—Ебро фронтĕнчи бойецсем, љотчиксем, морйаксем. Мĕн пурĕ 16 çын. Вокзал умĕнче митинг пулса иртнĕ. Делегаци председатĕлĕ—рабочисен пĕтĕмĕшлĕ сойузĕн Естăвком çекретарĕ Фелиппе Претелђ социалисăм çĕршывĕнчи ĕççыннисене—пĕтĕм тĕнчери пролетариатăн çĕршывне тата аслă Сталина саламланă.

— Испани республикĕн делегачĕсене, — тесе каланă Ф. Претелђ ТАСС корреспондентне, —Испанири тĕрлĕ политикăла партисен тата профсойузсен организацийĕсен пухăвĕсенче суйларĕç, делегацире Каталони, Мурси, Валенси, Мадрид представитĕлĕсем пур, вĕсем пурте Совет Сойузĕнче пĕрремĕш хут пулаççĕ.

— Делегатсем хушшинче—љотчик Еулогио Марийа Моралес, Ебро фронтĕнчи отделени командирĕ Хоакин Клемент Аделђ, лейтенант Алђфонсо Фернандес, фашиссен тыткăнĕнче икĕ çула йахăн пулнă çар морйакĕ Тобар Корбачо, Ебро фронтĕнчи çар комиссарĕ Франсико Каррине, делегаци çекретарĕ—Испани кортесĕнчи (парламентĕнчи) коммунисла депутат Хосе Антонио Урибес.

* * *

Çавăн пекех, нойаберĕн 5-мĕшĕнче Мускава Скандинави çĕршывĕсенчен 13 делегат тата Франциирен 21 делегат çитнĕ. Франц делегацине йалхуçалăх рабочисен сойузĕн председатĕлĕ Робер Помийн йертсе пырат.

(ТАСС).

Китай халăхĕ ССР Сойузĕнче Октăбĕрти Социалисăмлă револђуци 21 çул тултарнине уйавласа ирттерет

ЧУНЦИН, нойабĕрĕн 5-мĕш. Китайри общĕствăлă организацисем, вăрçă вăхăчĕ пулсан та, Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă револђуци 21 çул тултарнине уйавлама пикенсе хатĕрленнĕ.

Уйав кунĕ пысăк хуласенче—Чунцинре, Чендура, Сеанре, Ванђсианре, Ланжоуре, Кунђминре, Гуанђре тата ытти хуласенче те—„Ленин в Октябре", „Последняя ночь", „Депутат Балтики", „Волачевские дни", „Чапаев" совет кинокартинĕсене кăтартаççĕ. Чунцинре ССР Сойузĕн йачĕпе фотовыстăвка уçалат. Совет Сойузĕпе Китай хушшинчи кулђтурлă çыхăнăвăн общĕстви чаплă пуху туса ирттерет. Кĕнеке магазинĕсенче ССРС çинчен çырнă кĕнекесен выстăвкисене тăваççĕ.

Совет Сойузĕпе Китай хушшинчи кулђтурлă çыхăнăвăн общĕстви ССРС Китайри полпречĕ Луганец йулташ патне салам йанă.

Китай хаçачĕсем Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă револђуци 21 çул тултарнă йатпа нумай статйасем пичетлесе кăларнă.

Саккунсем хатĕрлекен палатăн председатĕлĕ Сунђ Фо хăйĕн статйинче çапла çырат: „Патша Росçийĕ чухăн, кайа йулнă çĕршыв, монархи пусмăрĕн çĕршывĕ пулнă. Совет Сойузĕ индустрилĕ çĕршыв, малта пыракан вăйлă çĕршыв, демократилĕ ирĕклĕхĕн çĕршывĕ пулса тăчĕ. Империалисăмлă агреççилĕ империя Росçийĕнчен вăйсăр нацисене пулăшакан çĕршыв тата пĕтĕм тĕнчипе мирлĕ пурнăçа сыхласа хăварассишĕн кĕрешекен çĕршыв пулса тăчĕ. Çавăнпа та Октăбĕрти Социалисăмлă револђуци 21 çул тултарни совет халăхĕшĕн çеç мар савăнăçлă кун пулса тăрат, мирлĕ пурнăçшăн тата ирĕклĕхшĕн тăракан пĕтĕм тĕнчери халăх Совет Сойузне йуратса тав тăват, унпала пĕр шухăшлă пулни çинчен калат.

Епĕр çак уйава, вăл етемлĕх историйĕнче паллă пулса тăнишĕн çеç уйавламастпăр. Совет Сойузĕ çуралса ӳссе пыни пусмăрта пурăнакан нацисемпе классене пример парса тăни пиреншĕн хаклă. Халђхи вăхăтра Йапони империалисăмне хирĕç пурнăçне шеллемесĕр пыракан кĕрешӳре çак пример Китай халăхĕшĕн уйрăмах çуттăн та уççăн курăнат."

„ССР Сойузĕнчи револђуци çĕнтерӳвĕн опычĕ тăрăх,—тесе çырат малала Сунђ Фо,—пирĕн нимĕнле йăвăрлăха пăхмасăр пыракан кĕрешӳ çĕнтерӳ тунипе вĕçленмеле. Епĕр Йапони милитарисĕсене хамăр территори çинчен хăваласа кăларнă хыççăн тин мирлĕ тата телейлĕ пурнăç патне пыма пултаратпăр".

(ТАСС).

Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă револђуци 21 çул тултарнине Францире уйавлаççĕ

ПАРИЖ, нойабĕрĕн 5-мĕш. ССРС тусĕсен Францири ассоциацийĕ ССР Сойузĕнчи Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă револђуци 21 çул тултарнă йатпа пайан Парижри чи пысăк залсенчен пĕринче чаплă пуху туса ирттерет. Çак пухăва организацилес ĕçе Францири политикă тата ăслăлăх ĕçĕнчи тата литературăри паллă çынсем хутшăннă.

„Йуманите" хаçат ССР Сойузĕнчи Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă револђуци 21 çул тултарни çинчен йатарласа çырнă статйасем пичетлесе кăларнă. Пайан хаçатра чаплă уйав йачĕпе уйрăм страница кăларнă. Францири паллă учонăй, ăслăлăх академин членĕ—профессăр Жан Перрен „Йуманите" хаçатра статйа пичетлесе кăларнă, вăл статйинче Совет Сойузĕ ăслăлăх тата кулђтурă йенĕпе пысăк çитĕнӳсем тунине палăртса çырнă.

Радикал-социалисла депутат паллă љотчик Боссутро (парламентри авиаци йенĕпе ĕçлекен комиççи председатĕлĕ) хăйĕн уйав йачĕпе çырнă статйинче Совет Сойузĕн çар вăй-хăватне паллă туса Франципе Совет Сойузĕ хушшинчи çыхăнăва çирĕплетме сĕнет.

ЙЕРШОВСЕН ÇЕМЙИ

Учитĕл сăмахĕ вĕçленнĕ. Ачасем килĕсене тухса чупнă. Вĕсен хушшинче вунвиçĕ çулхи Алексей Петрович Йершов та пулнă. Алексей, хăйпе пĕр тантăшсен умĕнче çийĕнчи тумтирĕ çĕтĕк-çурăккишĕн кулђанаканскер, тен çавăнпах та пулĕ, учитĕл ыйтăвĕсем çине те йаланах вăтанчăклăн ответ параканскер, пайан хăйне хăй никçанхинчен те ытларах хаваслăн тытнă. Тантăшсемпе уççăн калаçнă вăл, шăпăлтатнă. Çĕнĕрен çĕнĕ ыйтусем панă, ыйтăвĕсем çине хăйех ответленĕ:

— Пирĕн атте киле килмест тетĕн-и вара ес? Килет. Учитĕл каларĕ вĕт. Пĕтет ĕнтĕ вăрçă.

Ашшĕ йатне асăнсанах Алексей хăйĕн пуçĕнчи çĕлĕкне, турăх чĕресĕ йевĕр пуклак тӳпелĕ салтак çĕлĕкне, тытса пăхнă: йе пусарса лартнă ăна вăл йе ĕнсе хыçнеле каçăртса хунă та, хура çӳç пайăркисене çамки урлах йарăмлатса усăнтарнă.

Ку çĕлĕке ăна ашшĕ иртнĕ хĕлле курма килсен парса хăварнă пулнă... Курма çеç мар, сылтăм аллине амантнăскер, пĕтĕмĕшпех тесе килнĕччĕ вăл. Суран вăйлах пулман мĕн. Тухтăрсем часах сыватнă ăна. Тепĕр хут вăрçа илсе кайнă. Тепĕр хут тăлăха тăрса йулнă çемйе.

... Хапха умне çитсе çеç тăнă Алексей, çав самантрах ăна хулари почталђйон çыру пырса тыттарнă.

Алексей çырăва алла тытнă-тытманах уçнă. Пӳрт алăкĕ патнеле хыпаланса утнă май, вулама та пуçланă. „Атте çырат, атте! сиккелесе илнĕ вăл. Халех аннене вуласа паратăп. Учитĕл каланă сăмахсене çырнă ак.. Çав сăмахсенех..."

Пӳрте кĕнĕ Алексей:

— Итле-ха, анне? Çыру...

— Ан шарла!—чарнă ăна ултă çулхи йăмăкĕ Олђгă.—Курмастăн-им?

— Мĕн есĕ? йăмăкĕ кăтартнă пӳлĕм йеннеле кушак пек çепĕçĕн утса пынă Алексей. Алăк каррине йерипенĕн уçса пăхнă. Амăшĕ пиртĕ те тулла ыйхă ăшне путнине пĕрре пăхнипех туйса илме пулнă. Нимĕн хускалмасăр выртнă вăл. Унăн сăнĕ, йаланхи пекех, çутă, анчах тулли савăнăçсăр пулнă. Ун çумĕнчи пийеленчĕкре пĕчĕкçĕ ача кĕскен те хăвăрттăн сывласа выртнă.

Алăк каррине хупнă Алексей. Каллех пӳртре нимĕн сас тумасăр, чĕрне вĕççĕн утса, йăмăкĕ çумне пырса ларнă.

— Ывăл ача-и? —ыйтнă вăл.

— Аха, —тенĕ Олђгă.—Иван йатлă хуратпăр.

Паçăр вуласа пĕтереймен çырăва Алексей тепĕр хут вĕрçĕнĕрен пуçласа вуланă. Çырури сăмахсем çав тери хаваслă сăмахсем пулнă. Унта—влаç ĕçлекенсемпе хресченсен аллине куçни çинчен. такçан кĕтнĕ ĕмĕт пурнăçа кĕни çинчен, совет влаçĕн чи малтанхи декречĕсем çинчен каланă. Унтан, йулашкинчен вара: „Ку çырăва Петр Иершов ыйтнă тăрăх, епĕ унăн кĕрешӳри йулташĕ çыратăп, тесе паллă тунă.—Халлĕхе вăл хăй çыраймаст-ха. Лазаретра выртат. Часах сывалат вăл. Сире кулђанма хушмарĕ.."

— Атте! Каллех аманнă-и?!

— Ан çухăр!—тенĕ Олђгă.—Иван сывăрат вĕт. Анне те...

Çапла кĕтсе илнĕ çак çĕнĕ хыпара Йершовсен çемйи. Çак çĕнĕ пурнăç пуçланнине пĕлтерекен çĕнĕ хыпар çитнĕ кун вăл çемйере Иван çуралнă. Иван... çемйери иккĕмĕш ывăл.

... Ашшĕ таврăннă. Пурте чуптунă ăна, ыталанă. Çемйере пысăк хаваслăх пулнă. Калаçнă. Кулнă. Ыйту çине ответ, ответ хыççăн каллех çĕнĕрен-çĕнĕ ыйтусем сикесике тухнă. Анчах, Йершовсен пӳрчĕ, хаваслăхпа тулнă пӳрт, сасартăк шăпланнă. Ашшĕн хăрах аласăр çаннине курсан, пурте пĕр харăс:

— Ах! тенĕ те, самантлăха кам аçта пулнă, çав вырăнтах хытса тăнă. Пĕр-пĕрин çине тинкерсе пăхнă вĕсем. Кашнийĕн куçĕсенчен вĕри куççул тумламĕсем пăчăртанса тухнă.

Çулленхи пекех, кăçалхи Авиаци кунĕ Улатăр хулинче калама çук пысăк хавхаланупа иртрĕ. Август хĕвелĕ Сăр вăрманĕ хыçĕнчен хĕмленсе хăпарсанах хула çийĕнче хурçă кайăксем йавăнма пуçларĕç. Çав кайăксене тытса пыракансенчен пĕри—çирĕм çул кайала, Аслă Октăбĕр револђуцийĕ пулнă тейекен хыпар çитнĕ кун çуралнă Иван Петрович Йершов, Иван—Улатăрти аероклубра вĕренекен отличник. Авă, унпала пĕр картарах унăн тантăшĕ—отличник Шкавăв Валентин та вĕçет... Йанкилевич Капитолина та тата ытти сем те. Вĕсем пурте Аслă Октăбĕр тантăшĕсем йе унтан та кайарах çуралнă çамрăксем—Аслă çĕршывăн пулас паттăрĕсем.

— Хамăрăн çĕршыв çине йунлă тăшмансем каçса кĕрес пулсан,—тет Иван,—хамшăн та, аттене ĕмĕрлĕхе чăлах туса хăварнăшăн та тăшмана тивĕçлипе таваратăп. Çĕршывăмри çĕршер, пиншер паттăрсен ретне тăрса, йулашки йун тумламĕ йулмиччен кĕрешме хатĕр тăратăп!

Çаплах калат Иван пиччĕшĕ Алексей та. Вăл танкиссен шкулĕнче вĕренсе тухнă. Халĕ Ленинград çар округĕнче командир пулса ĕçлет. Иртнĕ çуллахи отпускне вăл Улатăрта ирттерчĕ. Авиаци уйавĕнче пулчĕ. Сывлăшра тĕрлĕрен фигурăсем тăвакан шăлнĕпе унăн тантăшĕсен самолђочĕсем çинчен куç илмесĕр пăхса тăракан нумай йышлă халăхпа пĕрлех, ашшĕпе—пенçионер Петр Йершовпа йунашарах тăчĕ. Амăшĕ те кунтах. Йăмăкĕ Олђгă та. Олђгă халĕ мединститутра вĕренет. Тепĕр çултан врач пулса ĕçлеме пуçлат вăл.

Вĕçеççĕ хурçă кайăксем. Вĕсем çине пăхнăçемĕн пăхас килет. Вĕсене ырлăх-сывлăх сунса, поетпа пĕрлех хыттăн кăшкăрса, ăшшăн-ăшшăн саламлас килет:

Çӳлерех вĕçĕр, çут çунатсем,
çӳлерех,
Çĕклĕр Аслă çĕршыв хăватне!
Аслă Сталин тытат пирĕн çут
çулйĕре
Çутă, чаплă коммунă патне!

Петĕр МИТТА.

Улатăр, 1938 ç.

Уйава лайăх хатĕрлентĕмĕр
(Красноармейĕц çырăвĕ)

Епĕр пурăнакан çар чаçĕнче Октăбĕр уйавне лайăх хатĕрлентĕмĕр. Çамрăк красноармейĕцсем хутшăннипе чăваш хорĕ организацилерĕмĕр, унта тĕрлĕрен чăваш йуррисене вĕрентĕмĕр. А.А. Петухов (Шупашкар хула советĕнче ĕçленĕ), И.М. Купцов (Сĕнтĕрвăрри районĕнчен), Андрейĕв (вăрман техникумĕнчен) красноармейĕцсем чăваш йуррисене лайăх йурлаççĕ.

Украинăран килнĕ скрипач Ворвихвост тĕрлĕ произведенисене калама, чăваш филармонийĕнче ĕçленĕ артист Малахăв хăйĕн номĕрĕсемпе тухма хатĕрленчĕç.

И. Купцов.

Уйав кунĕсенче хулари театрсенче мĕн кăтартаççĕ

** **Чăвашсен Академилĕ театрĕнче** Нойаберĕн 7-мĕшĕнче Островскин „Лес" пĕесине, нойаберĕн 8-мĕшĕнче Островскиннех „Правда хорошо, а счастье лучше" пĕесине кăнтăрла та, каçпа та лартса параççĕ.

** **Кино-театртра.** Нойаберĕн 7—8—9-мĕшĕсенче „Человек с ружьем" йатлă саслă филђм пырат.

** **Ача-пăча театрĕнче.** Нойаберĕн 6-мĕшĕнче Лђвовăн „За родину" йатлă пĕесине лартса пачĕç. Нойаберĕн 7—8-мĕшĕсенче çав пĕесăнах Çĕрпӳне кайса лартса параççĕ.

** **Строитĕлсен клубĕнче.** Нойаберĕн 6-мĕшĕнче рабочи-строитĕлсене „Юность Максима" саслă филђма кăтартрĕç, кăнтăрла ачасене „Юнные коммунары" филђма кăтартрĕç. Нойаберĕн 7-мĕшĕнче Карасевăн „Огни Маяка" пĕесăна вырăсла лартса параççĕ. Нойаберĕн 8-мĕшĕнче „Возвращение Максима" филђма кăтартаççĕ.

Вулакансене

„Чăваш Коммунĕн" çитес №-рĕ нойаберĕн 11-мĕшĕнче тухат.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНĂВ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 562 Гор. Чебоксары, типография № 1 Мест прома ЧАССР, заказ № 832, ф. 6. 58 × 84 п. л.